# Пичет кунĕ ячĕпе саламлатпăр!

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш Хĕрарăмĕ

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

1(923) №, 2016, кăрлач/январь, 16

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

### Хисеплĕ журналистсем, издательсем тата полиграфистсем!

**Сире Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

2016 çул Чăваш Ен журналисчĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ «Хыпар» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнăранпа 110 çул çитет. Чăваш журналистикин никĕслевçи Николай Васильевич Никольский çапла каланă: «Хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ».

Хаклă туссем! XXI ĕмĕрте çак пехиле упраса хăвармалла! Информацие республикăра пурăнакансем патне объективлă тата оперативлă илсе çитересси сирĕн профессионализмпа яваплăхран килет. Ку вара пирĕн çынсем социаллă пурнăç енĕпе хăйсене мĕнле туясси, регионти тата пĕтĕм çĕршыври обществăпа политика лару-тăрăвĕн тăнăçлăхне упраса хăварасси тĕлĕшпе питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

2016 çула Чăваш Енре Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Хăвăрăн статьясемпе сюжетсенче эсир Чăваш Енре пурăнакансен ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен куллен каласа паратăр, çемье хаклăхĕсене тата ĕçе юратассине пропагандăлатăр.

Сире, сăмах ăстисене, хăвăрăн ĕçе чунпа тата чĕрепе парăннă çынсене, тĕллеве пурнăçлама ăнтăлнăшăн, принциплăхшăн, тӳрĕ кăмăллăхшăн чунтан тав тăватăп. Шăпах эсир тăрăшнипе республикăра уçă информаци политики пурнăçланать, влаçпа общество хушшинче конструктивлă çыхăну йĕркеленнĕ. Çак çыхăну патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăйтытăмлăх органĕсене Чăваш Енре пурăнакансене кирлĕ йышăнусене вăхăтра тума май парать.

Сирĕн ĕçе Раççей шайĕнче те пысăка хурса хакласçĕ. Чăваш Енри чи пысăк икĕ телерадиокомпани представителĕсен пĕрлехи «Çакăнтан – тăван кил патне» проектне Пĕтĕм Раççейри «ТЭФИ-Регион» 2015 телекурав конкурсĕнче «Телекуравăн документлă фильмĕ» номинацире чи лайăххи тесе йышăннă.

Анчах сирĕн ĕç тухăçлăхне çирĕплетекен тĕп кăтарту – республика тата районсен хаçачĕсен тиражĕ упранса юлни, теле- тата радиоаудитори йышĕ пысăкланни.

Чăваш Ен Правительстви малашне те сире пур енĕпе те пулăшса пырĕ, сирĕн шухăша шута илĕ. Журналистсене, полиграфистсене тата издательсене хавхалану, пултарулăх ĕçĕнче çĕкленӳллĕ кăмăл, ăнăçусем тата аталану сунатăп!

**Чăваш Республикин**
**Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

**Уяв ячĕпе, хастар ĕçтешĕмĕрсем! Вăл паян, кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕнче, Чăваш патшалăх филармонийĕнче 11 сехетре пуçланать.**



### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 16.01 | –12 | –16 |
| 17.01 | – 9 | – 7 |
| 18.01 | – 1 | – 6 |
| 19.01 | – 6 | –10 |
| 20.01 | – 6 | – 9 |
| 21.01 | –10 | –13 |
| 22.01 | –11 | –15 |

●Чи маттур журналистсен ячĕсем паллă 3 стр.
●Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашсем улах лараççĕ 4 стр.
●Ывăлне вĕлернĕ путсĕрсем тĕрмерен тухасса кĕтнĕ хĕрарăм – пăшал туяннă 5 стр.
●Хĕлле те симĕс апат хатĕрлетпĕр 8 стр.
●Арăм курман вăхăтра... 9 стр.
●Ĕлĕк хĕрарăмăн çие юлнине курăксемпе усă курса тĕрĕсленĕ 11 стр.




2 стр.

# Пултаруллисем ĕçре çитĕнӳсем тăваççĕ, кил ăшшине упраççĕ





УЯВ

# Пултаруллисем ĕçре çитĕнӳсем тăваççĕ, кил ăшшине упраççĕ

### Эрнесерен – тулли конверт

Чăваш Енре пултаруллă журналист сахал мар. Пичет кăларăмĕсенче, радиопа телекуравра ĕçлеççĕ вĕсем. Уяв умĕн шăпах вĕсенчен пĕринпе – Чăваш наци телекуравĕн редакторĕпе – Олеся Руссаковăпа тĕл пултăмăр.

«Туслăх йывăçĕ», «Кил ăшши», «Тĕплĕ калаçу» кăларăмсен авторне чылай куракан кăмăллать. Паян вăл сенкер экран çине мĕншĕн тухманнине хăшĕ-пĕри, тен, чухласах та пĕтерейместь-тĕр. Пултаруллă журналист – виçĕ ача амăшĕ. Кĕçĕннисемпе – йĕкĕрешсемпе – хальлĕхе декрет отпускĕнче.

Журналистика анине шкулта вĕреннĕ чухнех сухалама пуçланă Олеся. Çырма юратаканскер «Тантăш» хаçатпа çыхăну тытнă. Эрнесерен конверта сăвă-статья тултарса янă вăл. Хăйĕн ятне хаçатра курни пушшех савăнтарнă, хăпартлантарнă хĕрачана. 1998 çулта «Тантăш» хаçат лауреачĕ пулса тăнă вăл.

– Ун чухне ку сăмах мĕне пĕлтернине те ăнланман. Чухлакан пулсан пушшех хавхалантарчĕ. Тата ытларах çырма тытăнтăм. Редакцие хăнана чĕннĕччĕ, диплом, парне панăччĕ. Тутлă апатпа сăйланăччĕ. Ун чухне ман çинчен çырнă статьяна халĕ те типтерлĕ упратăп, – тет Олеся.

9 класс пĕтерсен Элĕк хĕрĕ Канашри педагогика училищине вĕренме кĕрет. Тем тесен те журналист пулас ĕмĕчĕ вăйлăрах пулнă çав. Ахальтен-и икĕ çултан аттестат илсе ЧПУн журналистика факультетне каять вăл. Пĕрремĕш курс хыççăн пултарулăхне радиора тĕрĕслесе пăхать, «Тантăш» çинчен те манмасть. Виççĕмĕш курс пĕтерсен вара пĕр хăрамасăр тантăшĕпе Мускава тухса каять, Пĕрремĕш канала ĕçлеме вырнаçать. Тĕрлĕ кăларăм хатĕрлеме хутшăнать унта. Тăваттăмĕш курс хыççăн та практикăна унтах тухать. Пиллĕкмĕш курсра вĕреннĕ вăхăтра Çĕнĕ Шупашкарти кабель телекуравĕнче тăрăшать. Ун чухне вăл усăллă кăна-ха, савăнпах Олеся хăйне ăна йĕркелесе яракансенчен пĕри тесе те хăюллăнах калама пултарать. Диплом илсен каллех çĕршывăмăрăн тĕп хулине çул тытать пике. «Жди меня» кăларăмра çулталăк вăй хурать, сырусен пайĕнче тăрăшса çынсене ырă тăвать.

### Хĕрарăма юрас тесен...

Шăпа пӳрнипе те шăпах Мускавра паллашать вăл.

– Хăйĕн çуралнă кунĕнче лайăх парне тупнă вăл, – шӳтлет Олеся кун пирки.

Нумай та çӳремен çамрăксем, виçĕ уйăхран хĕр савнине ашшĕ-амăшĕпе паллаштарнă, тата виçĕ уйăхран туй та кĕрлеттернĕ.

– Мускавра хваттер тара илсе пурăнаттăмăр: аппа, эпĕ тата тантăшăм. Хăнана аппапа тусăн йĕкĕчĕсем те пыман мар. Алăкран пырса кĕрекен пӳлĕмре сутă çукчĕ. Кам кăна тытса пăхманччĕ пуль вăл люстрăна – никам та юсаймарĕ. Ун чухне эпир Сашăпа паллашнă çеçчĕ-ха. Кĕрсе тухнă чухне сутă çуккине каларăм ăна. Пĕр-икĕ минутрах тӳрлетсе хучĕ. Арçынна юрас тесен тутлă апат çитермелле теççĕ. Упăшка вара мана алли çыпăçуллă пулнипе, ĕçченлĕхĕпе илĕртрĕ. Юрату-юрату теççĕ те, диван çинче телевизор пăхса кăна выртсан вĕри туйăм та сӳнет пулĕ. Арçыннăн



темле пулсан та чи малтан çемьене тăрантармалла. Яла кайсан та тӳрех ĕçе пикенет вăл.

Паллах, арçыннăн ăслă та пулмалла. Унпа тем пирки те калаçма май пултăр. Паллашсанах ăс-хакăлне тĕрĕслес шухăшпа истори пулăмĕсем пирки сăмах пуçараттăм – пĕлетчĕ. Математикăра та аташмастчĕ. Çакă та илĕртрĕ, – пытармасть юратнă мăшăрĕпе епле паллашнине чиперук.

Саша ун чухне Мускаври строительство организацийĕнче ĕçленĕ. Халĕ те унтах вăй хурать вăл. Мăшăрĕ вара пĕрремĕш пепкине çуратма тăван тăрăха тавраннă. Çапла пурăнаççĕ те: арçын – Мускавра, хĕрарăм – Шупашкарта.

– Вăл аякра пулнине туймастăп та. Часчасах, тепĕр чухне эрнере икĕ хутчен те, килсе каять. Ялтан хулана çӳренĕ пекех ярăнать. Хушăран икĕ эрнере пĕрре куратпăр, – пĕлтерет мăшăрĕ.

### «Эпĕ хам та ял ачи»

Йĕкĕрешсене пăхма вара пепкесем мĕн çуралнăранпах кукамăшĕпе кукашшĕ пулăшаççĕ. Элĕк районĕнчи Вылпасарта пурăннă Илларионовсем тахçанах Çĕнĕ Шупашкарта тĕпленнĕ.

– Аслă ывăлпа ытларах аппаланаттăм, унпа йывăртарахчĕ. Пĕрремĕш пулнипе те çыхăннă ĕнтĕ çакă. Тен, ытларах йĕнĕ те пуль. Кипкине чĕркеме те йĕркеллĕ пĕлмен-тĕр. Халĕ вара опыт пур. Йывăррине пачах туймастăп. Асли те саккăрта ĕнтĕ, вăл та шăллĕсене пăхма пулăшать. Урама усăлма тухсан та «йывăр пуль» текенсем тĕл пулаççĕ. Çăмăл та. 6 уйăхранпах иккĕшне çăмăллăнах хăваратăп. Пĕрпĕрне кураççĕ, юнашар çын пуррине туяççĕ вĕсем, çавăнпах эпĕ айккине пăрăнсан та Арсенийпе Георгий лăпкăн выляççĕ. Дима аппа марччĕ. Эпĕ пăрăнсанах çари çухăратчĕ, – кулать телейлĕ амăшĕ.

Пурнăçра кун пек парне пуласса пачах кĕтмен Руссаковсем. Иккĕмĕшне шырама тухнăскерсем йĕкĕреш çаклатнă. Тухтăрсем кун пирки пĕрремĕш хутчен пĕлтерсен амăшĕн куçĕ те шывланнă. Хăрама та, шикленме те пĕлмен вăл, савăннă кăна. Иккĕшĕн те ашшĕсен аппăшĕсем йĕкĕреш хăраххисем иккенне шута илсен тĕлĕнмелли нимĕн те çук.

– Ачасем чирлесе асаплантарман мана. Кăкăр сĕчĕпе çитĕнеççĕ вĕсем, тен, çавăнпах çирĕп пулĕ. Теприсен кăкăр сĕчĕ çитмест, кĕлетки илемсĕрленесрен хăраççĕ. Маншăн вара тĕп вырăнта – ачасен сывлăхĕ. Асли те пачах чирлесе курман, температура мĕнне те пĕлмен унпа. Хам та ял хĕрачи-çке, – тет çемьере вăтамми.

### Укçа-тенкĕ ыйтăвне арçыннăн татмалла

Пултаруллă çын пур енчен те пултаруллă. Хăшĕ малтан карьера тума ĕмĕтленет, çемье пирки пачах шухăшламасть. Теприсем вара ĕçре те çитĕнӳсем тăваççĕ, кил ăшшине те упраççĕ. Олеся та малтанах вĕренсе пĕтересси çинчен шухăшланă, кайран ĕçе вырнаçма тĕв тунă. Шăпи хăех Патăрьел районĕнчи Сител каччипе паллаштарнă, йыш хушăннă.

– Теприсем, тен, ĕçпе телейлĕ пулĕ. Паянхи кун мана çемьепе, ачасемпе лайăх. Хĕрарăмăн чи малтанах кил ăшши çинчен шухăшламалла, пепкесемпе аппаланмалла. Укçа-тенкĕ ыйтăвне арçыннăн татмалла. Хăть те хăш самантра та курас килет ачасене. Ăçта та пулсан тухсан та хăвăртрах киле таврăнма ăнтăлатăп. «Анне» тесе чĕнни кăна мĕн тери ăшăлăхпа ырăлăх парнелет. Эпĕ хам та виçĕ ачаран кая мар çуратма ĕмĕтленнĕ. Упăшкам Саша та ачаранах пысăк çемье пирки шухăшланă-мĕн.

«Турă ача парсан ачана ӳстермелĕх те парать» теççĕ. Пирĕн те çаплах пулса тухрĕ. Пĕрлешсенех çамрăк çемье программăпа хваттер илме черете тăтăмăр. Анчах ниепле те куçмарĕ вăл, ăçта кăна çитмерĕм пуль! Ачасем çулталăк тултарнă çĕре çитрĕ черет. Мĕн тери пысăк парне пулчĕ ку. Хваттерĕн 35 процентне патшалăх саплаштарчĕ. Амăшĕн капиталне илме пултартăм, унсăр пуçне виç ачашăн Сĕнтĕрвăрринче 12 сотка çĕр, республикăри амăшĕн капиталне пачĕç. Çуратма хăрамалла мар тессĕм килет, пурнăç паратех, – тет нихăçан та пуç усманскер.

### Нобель премине илме ĕмĕтленет

Хастар та пултаруллăскер шкулта вĕреннĕ чухнех тĕрлĕ конкурса хутшăннă. Юрламалла-и, ташламалла-и, сăвă каламалла-и – пур çĕрте те Олеся Илларионова пулнă. Халĕ те çаплах. Хăйне евĕр хобби çакă. Олеся тĕрлĕ конкурса хутшăнма кăмăллать. Чылай чухне ăнăçлă. 2013 çулта вăл пĕтĕм Раççейри «Журналистсем террора хирĕç» конкурсра çĕнтерчĕ, «Живи и помни» фильмпа «Щит России-2013» 16-мĕш фестивалĕн дипломанчĕ пулса тăчĕ. Пĕтĕм Раççейри «Раççей патриочĕ» конкурс призерĕ те, «Единение» конкурс лауреачĕ те, ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ те. Кăсем пысăкраххисем кăна-ха, ыттисем тата мĕн чухлĕ-ши? Ачисемпе çыхăннă видеоролика «Сам себе режиссер» кăларăма ярса панă.

– Ун чухне ачасем çулталăкра çеçчĕха. Ача вырăнĕ кантăк умĕнче ларатчĕ. Эпĕ кĕсье телефонне чӳрече çине хунă та ăна илессишĕн эх! тапаланаççĕ хайхисем. Вĕсене ӳкерес терĕм. Йĕкĕрешсенчен асли кĕçĕннин кутĕнчен тĕксе хăпартса яни хама та тĕлĕнтерчĕ. Çулталăкри ачасем пĕр-пĕрне çапла пулăшни питĕ кăсăклă пек туйăнчĕ. Çавна конкурса ярса патăм та. Ачасене те тĕрлĕ ăмăртувăйăа хутшăнтарас килет. Асли ача садне çӳреме пуçланăранпах тĕрлĕ конкурса явăçтаратăп. Çырма юратать вăл, питĕ нумай вулать. Ытлашшипех, эпĕ чарнине кура пытанса та ларать. Малтан Президент пулатăп тетчĕ, халĕ мĕн те пулсан çĕнни шухăшласа кăларса Нобель премине илме ĕмĕтленет. Йĕкĕрешсенчен пĕрне тухтăр тăвас килет, – пытармасть Олеся.

Сывă пурнăç йĕркипе те туслă Руссаковсем. Пушă вăхăт тупăнсанах усăлса çӳренисĕр пуçне йĕлтĕрпе ярăнаççĕ, бассейна çӳреççĕ.

– Йăпăлтатма юратмастăп. Мĕн те пулин килĕшмесен çынна тӳррĕн калатăп. Çавăнпах курайманнисем те пур. Теприсем, тен, кӳренсе пурăнаççĕ пуль. Хыçра сăмахлакансене, кусран калама хăяйманнисене сивлетĕп, – тӳрĕ чунне усать журналист.

Нумай ачаллă телейлĕ çемье сахал мар Чăвашра. Олесьăпа Саша вĕсен йышне кĕнĕ те ĕнтĕ. Пурăна киле, Арсенипе Георгий кăшт ӳссен, хĕр шыраса, тен, йыш тата та хушăнĕ-ха. Виççĕ çинче тăваттăмĕшĕ пачах та ытлашши мар телейлĕ хĕрарăмшăн.

**Татьяна НАУМОВА.**

Çемье архивĕнчи сăнӳкерчĕксем.

**Кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕнче Раççей пичечĕн кунне уявлаççĕ. Шăпах çак кун 1703 çулта I Петĕр патша хушăвĕпе çĕршывра пĕрремĕш хаçат тухнă. 1906 çулхи кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче вара «Хыпарăн» пĕрремĕш номерĕ кун çути курнă. Йăлана кĕнĕ йĕркепе республикăри пичет журналисчĕсем професси уявне кăрлачăн виççĕмĕш вырсарникунĕнче паллă тăваççĕ, кăçал вăл уйăхăн 17-мĕш кунĕпе пĕр килет.**

**Роскомнадзор пĕлтернĕ тăрăх, кăрлачăн 13-мĕшĕ тĕлне Раççей реестрĕнче 84 пине яхăн МИХ регистрациленнĕ. Республикăра – 177, вĕсенчен 142-шĕ – хаçат-журнал.**





# Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Çырăвне хатĕрлеме сĕнÿсем кĕтетпĕр

**Çулталăкăн тĕп документне – Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне яракан Çырăва – хатĕрлес ĕç малалла пырать.**

Çыру 2016 çулхи тĕп тĕллевсене тата акцентсене палăртĕ. Регион ертÿçи экономикăна ÿсĕм тăрăмĕнче тытса тăрас тата халăх пурнăçĕн пахалăхне япăхлатас мар тесе мĕн тумалли çинче тĕплĕн чарăнса тăрĕ.

Çак документра ЧР Министрсен Кабинечĕн, ЧР Патшалăх Канашĕн, вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен, предприятисемпе организацисен малашлăх ĕçĕн векторĕсене те палăртĕç. Çырăва хатĕрленĕ чухне йăлана кĕнĕ тăрăх республикăра пурăнакансен, общество организацийĕсен, граждан обществин ытти институчĕн шухăш-сĕнĕвне те шута илĕç.

Сĕнÿсене çак адреспа: Чăваш Республики, Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт, электронлă почтăпа: pres5@cap.ru, analit1@cap.ru, analit9@cap.ru /«Çырăва хатĕрлеме» тесе паллă тумалла/, çавăн пекех çак телефонсемпе: (8352) 64-20-30 хушма 2084, 64-20-30 хушма 2085 – йышăнаççĕ.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ.**

### ПĔТĔМЛЕТÿ

## Лауреатсем паллă

***Висĕмкун Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн Çемен Элкер, Николай Никольский тата Леонид Ильин ячĕллĕ премийĕсене парассипе ĕçлекен комиссийĕсен ларăвĕсем иртрĕç, МИХ коллективĕсем çак наградăсене илме тăратнă авторсен ĕçĕсене тишкерчĕç.***

Тăлăх ачасене пăхса çитĕнтерессине профилактикăлассипе, ача усрава илекен çемьесен пĕлтерĕшне ÿстерессипе çыхăннă материалсемшĕн **«Хыпар» хаçатăн социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕн редакторне Ирина Ивановнăна,** экономикăна аталантарассипе, социаллă пурнăçа лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусене «Советская Чувашия» хаçатра пичетленĕ материалсемпе «Чăваш Ен» ПТРК эфирĕнчи телепередачăсемшĕн «Советская Чувашия» корреспондентне **Леонид Никитина** Çемен Элкер ячĕллĕ премии пама йышăннă.

**«Хыпар» Издательство çуртĕн «Самант» журналĕнче** кун çути кăтартнă чăваш халăхĕн хăйнеевĕрлĕхне упраса хăварассипе çыхăннă материалсемшĕн çак кăларăм редакторĕ **Владимир Степанов** Н.Никольский ячĕллĕ премие тивĕçнĕ.

Экологи хăрушсăрлăхне, тавралăха хÿтĕлессине халалланă, «Хыпар» тата ытти хаçатра пичетленнĕ статьясемшĕн Россельхознадзор управленийĕн пресс-секретарьне **Надежда Васильевăна** Леонид Ильин ячĕллĕ премии пама йышăннă.

ЧР Журналистсен союзĕн правленийĕ висĕмкунах çак премисене парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен йышăнăвне пăхса тухса çирĕплетнĕ. «Хыпар» Издательство çуртĕн коллективĕ ĕçтешĕмĕрсене – Ирина Владимировнăпа Владимир Васильевича тата «Хыпарăн» общество корреспондентне Надежда Вениаминовнăна – професси союзĕн наградисене тивĕçнĕ ятпа ăшшăн саламлать!

### СЫВЛĂХ

## Çуралакан ача пурăнтăр

**Чăваш Республикинче пĕчĕк ача сахал вилни, çак кăтарту Европа, АПШ, Япони шайĕпе танлашни çинчен РФ сывлăх сыхлав министрĕ Вероника Скворцова Пĕтĕм Раççейри канашлура каланă.**

Роспотребнадзор ертÿçи Анна Попова палăртнă тăрăх, 2015 çулта çĕршыври 45 миллион çынна прививка тунă. «Ку сывлăх сыхлав тытăмĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ сул вĕçĕнче тата çулталăк пуçламăшĕнче чирлекенсен йышĕ пĕчĕк пулчĕ», – тенĕ вăл.

«Пĕчĕк ача вилеслĕхĕн кăтартăвĕ çĕршывра 6 процентра танлашать. Уйрăм регионсене – Чăваш Республикине, Пенза, Тамбов, Киров, Магадан облаçĕсене, Ненец автономи округне – палăртса хăварас килет. Унти лару-тăру Европăри, АПШри, Японири пекех», – сăмах илнĕ РФ сывлăх сыхлав министрĕ Вероника Скворцова.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

### ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

## Савăнăçлă Сурхури

Сурхури – авалхи чăваш уявĕ. Ăна ĕлĕк Раштавран тытăнса Кăшарничченех иртнернĕ. Чылай çĕрте çак йăла-йĕрке халĕ те манăçман. Юнкун Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен вăтам шкулĕнче вĕренекенсем «Савăнăçлă Сурхури» улах касĕ иртнернĕ. Класс ертÿçи А.Ананьева чи малтан ачасене çак уяв историйĕ пирки тĕплĕн каласа кăтартнă. Витере путек-сурăх ури тытмасан та шăпăрлансем хаваспах уяв касĕнче юмăç янă, тупмалли юмахсен тупсăмне шыранă, йăла-йĕрке юррисем юрланă. Унсăр пуçне килте ятарласа пĕсернĕ йăвачапа, ăшаланă пăрçапа, пылак апат-çимĕçпе хăналаннă. Юлашкинчен ачасене Сурхури уявĕ пирки видеофильм кăтартнă.

**Елена АТАМАНОВА.**

### ÇЫРАВ

## Кашни хуçалăх шутра

Чăваш Енре Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çурлан 15-мĕшĕччен ирттерме палăртнă. Çак пысăк та яваплă ĕçе пурĕ 660 çын хутшăнĕ. Вĕсен ялсенчи – 240, хулари – 9 пине яхăн хуçалăх, 4 пине яхăн фермер хуçалăхĕ çинчен кăтартусем пухма тивĕ. 11 районта шута илмелли объектсен йышĕ 10 пинрен те иртет. Республикăра ял хуçалăх çыравне иртнĕ çулах хатĕрлеме тытăннă. Ку ĕç малалла пырать. Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне иртнерни çĕрпе мĕнле усă курнине, мĕн чухлĕ акнилартнине, вылăх тата кайăк-кĕшĕк шутне, ял хуçалăх апат-çимĕçне мĕн чухлĕ туса илнине пĕлме май парать.

**Елена МИШИНА.**

### ĔÇ ÇЫННИН ÇУЛТАЛĂКĔ

## Кĕнекере те мухтаççĕ

Йĕпреç районĕнчи Туçа ял библиотекарĕ Ирина Пудовкина Кĕлĕмкасси вăтам шкул ачисемпе ĕç пĕлтерĕшĕ тавра калаçу йĕркеленĕ. Тĕлпулăва Чăваш Республикинчи Ĕç çыннин çулталăкне халалланă. 5-7-мĕш класра вĕренекенсене тĕрлĕ професси çинчен каласа кăтартнă. Анлă сарăлнисене кăна мар, манăçа тухнисене те аса илнĕ. Библиотекăра ятарласах «Ĕç çыннине кĕнекесем мухтаççĕ» курав йĕркеленĕ.

Çакнашкал калаçу ачасене професси суйлама пулăшать, ĕç çыннине хисеплеме вĕрентет.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

### НАРКОТИК

## Вăхăтра пĕлтермелле

2015 çулта Наркотĕрĕслев управленийĕпе 329 çын çыхăннă. 79-шĕ çыру янă, 138-шĕ «шанăç телефонĕпе» шăнкăравланă, 48-шĕ Интернет урлă хыпар пĕлтернĕ, 64-шĕ хăйсем пынă. Наркотик тĕлĕшпе йĕркене пăснă тĕслĕхсене шута илнĕ.

Наркотикпе сутă тăвакан, наркопритон çинчен талăкĕпех 23-01-00 «шанăç телефонĕпе» пĕлтерме юрать. Кам шăнкăравлани вăрттăнлăхра юлĕ. Çавнашкалах info@21.fskn.gov.ru электрон адреспа çыру яма пулать.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

### ТАВ СĂМАХĔ

# Пысăк йыш – сумлăрах, пĕрле эпир – вăйлăрах

Сывă-и, тăванăм, вулаканăм! Акă санăн аллунта "Чăваш хĕрарăмĕн" черетлĕ номерĕ, 2016 çулта пĕрремĕш кун çути курнăскер. Сирĕн хушăра пирĕн хаçата пуçласа вулакан та пуррине редакцие килнĕ çырусенчен, шăнкăравсенчен пĕлетпĕр. Акă Каçал тăрăхĕнчен Мария Козлова пирĕн пата иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнчех çырса пĕлтерчĕ çакăн пирки. Çамрăксенчен чылайăшĕ ялта пурăнакан аппăшĕ-амăшĕ патне канмалли куна кайсан вулать "Чăваш хĕрарăмне". Мария Ефимовна вара, пачах тепĕр май, пирĕн хаçатпа хĕрĕ патĕнче хăналаннă чухне паллашнă. Вăл маларах ытти кăларăмсене çырăнса илнĕ иккен, халĕ вара вĕсен çумне "Чăваш хĕрарăмĕ" те хушăнни пире савăнтарать. Хастар вулаканăмăр малашне те пирĕнпе çыхăну тытасса, çыру вĕçтерессе шансах тăратпăр.

Тусăмăрсем, халиччен пирĕн кăларăма тĕрлĕ киоскра илсе вуланăскерсем, Çĕнĕ çултан хаçата çырăнсах илме кăмăл турĕç. Вĕсен хушшинче – Вăрнар тăрăхĕнче çуралса ÿснĕ, шăпчăк сассиллĕ Людмила Черноиванова /хĕр чухнехи хушамачĕ Пухова/. Ытти тус-юлташ та унран тĕслĕх илессе шанас килет.

Çапла пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарăнать тираж... Пирĕншĕн, хаçатра ĕçлекен журналистсемшĕн, тираж сывлăшпа танах вĕт. Çавăнпа та халиччен те "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçата çырăнса илнĕ тус-юлташăмăра, малашлăха та унпах ура ярса пусма кăмăл тунă тăванăмăра чунтан тав тăватпăр. Малашне те çаплах пĕрле пуласчĕ. Пысăк йыш – сумлăрах, пĕрле чух эпир – вăйлăрах. Тираж пысăк пулни пире сирĕн ыйтăвĕрсене тÿрешарапа сÿтсе явма пулăшать. Ахальтен мар-тăр вулакансенчен килекен ыйтусене нумай чухне туххăмрах татса пама май килет. Апла тăк влаç та пире шанать. Çапла майпа хаçат вулакана çĕнĕ хыпарпа, кăсăклă статьяпа тивĕçтернисĕр пуçне влаçпа общество хушшинче чăн-чăн кĕпер пулса тăрать.

...Çĕнĕ çулта Хĕл Мучирен те ытларах çырăнтару кампанийĕн кăтартăвĕсен пĕтĕмлетĕвне кĕтетпĕр. Пĕр шухăшласан, пит кулянмалли хыпарах илсе килмерĕ Упăте. Анчах та "кашни чăваш хĕрарăмне – пĕрер "Чăваш хĕрарăмĕ" текен шухăша пурнăça кĕртмешкĕн ниепле те вăй çитерейместпĕр-ха. Паллă ĕнтĕ, çакна сирĕнсĕр пурнăçлаймăпăр, хаклă вулакансем. Çук, тираж ÿсни журналистăн кĕсйине ним чухлĕ те хулăнлатаймасть, ăна нимĕнле витĕм те кÿмест ку. Апла пулсан пире ку мĕн тума кирлĕ тетĕр-и? Сирĕнпе пĕрле – вăйлă пулма.

"Чăваш хĕрарăмне" Раççейĕпех çырăнса илеççĕ. Республика тулашĕнче пурăнакан йăхташăмăрсене пирĕнтен – уйрăмах тав сăмахĕ. Эсир уйрăмах кирлĕ пире. Чăваш чĕлхине, халăхăмăрăн йăли-йĕркине тăван кĕтесрен аякра пурăнсан та куç пек упраса тăнишĕн эсир мухтава тивĕçлĕ. Паян "Чăваш хĕрарăмĕ" республика тулашĕнче 414 экземпляр сарăлать. Пирĕн кăларăма Пушкăрт /72 экземпляр/, Дагестан /2/, Мари /2/, Тутар /204/, Удмурт /1/, Чечен /1/ республикисенче çырăнса илеççĕ. Çавăн пекех тусăмăрсем Владимир /1/, Вологда /1/, Волгоград /7/, Воронеж /1/, Иваново /1/, Иркутск /1/, Калуга /1/, Кемĕр /3/, Мускав /1/, Чулхула /2/, Новосибирск /1/, Эрĕнпур /2/, Орел /1/, Пенза /1/, Псков /1/, Самар /24/, Сарă ту /6/, Тверь /5/, Томск /1/, Тюмень /7/, Челябинск /1/ облаçĕсенче йышлă. "Чăваш хĕрарăмĕпе" Краснодар /2/, Красноярск /8/, Пермь /1/ крайĕсенче пурăнакансем те çыхăнăва татмаççĕ. Крым шăпи юлашки вăхăтра кама пăшăрхантармасть-ши? Унта тĕпленнĕ йăхташăмăрсем те – пирĕн туссен йышĕнчех: Севастополь хулинче "Чăваш хĕрарăмне" 1 çын çырăнса илме кăмăл тунă, Симферопольте – 3-ĕн. Тавтапуç, тусăмăрсем, пирĕн ĕçе кăмăлланăшăн.

Тусăмăрсен пысăк пайĕ, паллă ĕнтĕ, республикăн тĕрлĕ районĕнче пурăнать – Чăваш Енре пирĕн хаçат пурĕ 4894 экземпляр сарăлать. Çакна тинĕсри тумлампа танлаштарни тусăмăрсене кÿрентерни пулĕччĕ – тумлам та пăра шăтарать. Тавах, тăванăмăрсем, пирĕн çемьерех юлнишĕн, пирĕнпе çыхăнăва татманнишĕн! Малашне те пĕрлех пуласчĕ. Çапах та, тен, сирĕн пĕлĕшĕрсен хушшинче "Чăваш хĕрарăмне" çырăнса ĕлкĕрейменнисем пур. Вĕсене савăнтарма васкăр – кăрлачăн 25-мĕшĕччен почтальонпа тĕл пулсан пирĕн кăларăма вĕсем нарăс уйăхĕнчен пуçласа илсе тăма пултараççĕ. Хулара пурăнакансен вара укса-тенке самай перекетлеме май пур – хаçата Пичет çуртне, "Чăваш хĕрарăмĕн" редакцине килсе илмелле çырăнма пулать. Уншăн 117 тенкĕ кăна тÿлемелле. Кун пек меслетĕн тепĕр лайăх енĕ – журналистсемпе куçа-куçăн тĕл пулса калаçма та меллĕ капла.

Çĕнĕ çула кĕтсе илсе киввине ăсатса ятăмăр. Кăçал та тĕрĕс-тĕкел пурăнасчĕ, тăванăмăрсем. "Чăваш хĕрарăмĕн" редакцийĕ пурне те ăнăçупа телей сунать. Кашни кун сире савăнăç кÿтĕр.

**"ЧХ" редакторĕ Маргарита ИЛЬИНА.**

ПУЛТАРУЛЛИСЕМ

# Чун-чĕре юрланă чух

**Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашри кукамайсемпе асаннесем хĕллехи вăрăм каçсенче кичемленсе, тунсăхласа лармаççĕ. Кил-çуртри мĕнпур ĕçе вĕçленĕ хыççăн каçсерен ялти вулавăша васкаççĕ. Кунта шăп пилĕк çул каялла ал ăстисен «Тĕпел» клубĕ йĕркеленнĕ.**

– Пирĕнтен пĕрне çавра менелникĕнче илемлĕ тутăр парнеленĕччĕ. Ал ĕçĕ кирек хăш хĕрарăма та кăсăклантарать. Çекĕлпе çыхнă хитре тутăр пире те илĕртрĕ, вăл вăхăтра унашкалли никамăнах та çукчĕ. Канаша кайса çиййĕнчех темĕн тĕрлĕ çип туянтăмăр. Килте пĕччен çыхса ларма кичем, тепĕр чухне телевизор та йăлăхтарса çитерет, çавăнпа та каçсерен улах ларас терĕмĕр. Çапла пĕр кĕтмен çĕртен йĕркеленчĕ пирĕн «Тĕпел», – пĕр-пĕрне пӳлсех каласа кăтартаççĕ илемлĕ чăваш тумĕллĕ ăш пиллĕ аппасем.

Улаха çӳрекен хĕрарăмсем халь эрешлĕ тутăр кăна мар, кофта, шарф, алса-чăлха тата ăшă ытти япала çыхаççĕ. Ку енĕпе вĕсене Зоя Мижеева библиотекарь нумай пулăшать. Интернетран, тĕрлĕ журналтан ӳкерчĕксем тупса парать. Чей вĕретсе ĕçтерет. Кукăль-пӳремечне кашниех килтен пĕçерсе килет. «Зоя Витальевна компьютерпа ĕçлеме те хăнăхтарчĕ. Килте халь кашниййĕнех Интернет пур. Хамăрăн улах каçне видеопа курсах ларатпăр, пĕр-пĕрин ăсталăхĕпе паллашатпăр», – каласа кăтартать ветерансен ертӳçи Зоя Герасимова.



Юрра-ташша ăста кинемисем клуб çумĕнчех «Тĕпел» ансамбль йĕркеленĕ. Районти, ялти уявсенче яланах сцена çине тухаççĕ вĕсем. Репертуарта юрă-ташă та, сăвă, вăйă, кулăш та пур. Зоя Васильева режиссер нумай пулăшать вĕсене. 2012 çулта районта ирттернĕ «Талантсем» фестивальре палăрнă ушкăн. Çакăн хыççăн татах та хавхаланса кайнă. 2014 çулта Йĕпреçре иртнĕ «Ман чун-чĕре юрлать» фестивальрен дипломпа тавраннă маттурсем. Иртнĕ çул Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалласа ирттернĕ «Алăкран тухрăм, тайăлтăм» фестивальре «Шурă хурăн мĕнрен ӳсет» юрăпа 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Кайран Шупашкарта иртнĕ гала-концерта та хутшăнма тивĕçнĕ.

Алăстисем мĕнпур уява пĕрле ирттереççĕ. Унсăр пуçне ялти ватăсене юбилейпа саламлама çӳреççĕ, кашнинчех пĕчĕк парнепе савăнтараççĕ.

«Тĕпелсем» авалхи чăваш тумĕпе тухаççĕ сцена çине. Килтен киле çӳресе сурпан, тенкĕллĕ мăй çыххи те, çăпата шыраса тупнă вĕсем. Ятарласа чăваш тĕрриллĕ саппунсем, кĕпесем çĕлеттернĕ. «Акă манăн кĕпе кукамайăнах, 90 çул каяллахиех вăл, арчара выртнăскер кивелме те пĕлмест. Патăрьел тăрăхĕнчи Ульяновкăран илсе килнĕ эпĕ çак пир кĕпене», – паллаштарать Зоя Герасимова.

Енĕш Нăрвашри асанне-кукамай Удмуртири «Буран кинемисенчен» нимĕнпе те кая мар. Сăмах май, «Паян пирĕн пысăк уяв» юрра вĕсен кĕввипе шăрантараççĕ. «Тĕпел» ушкăнăн хăйĕн гимнĕ те пур.

«Эпир, улах ларакансем, пурте пĕрешкел кăмăллă. Пирĕн хушăра кĕвĕçӳ, курайманлăх çук. Туслăха, тăванлăха мала хуратпăр эпир, килĕштерсе пурăнсан çеç çитĕнӳ тума, малалла кайма пулать. Пĕр-пĕрне темиçе кун курмасан тунсăхласах çитетпĕр. Икĕ эрнере пĕр хутчен пуçтарăнма вăхăт тупатпăрах», – чунне уçаççĕ ушкăнрисем.

Темле вăй-хăват тапса тăрать тейĕн вĕсенче. Кинемисен сăн-питĕнче йăл кулă çиçет. Чунĕпе те çамрăк вĕсем. Кашни куна усăллă тата асра юлмалла ирттерме тăрăшаççĕ «Тĕпелсем». Тăван халăх йăли-йĕркине, аваллăхне çамрăксем ан манччăр, вăл ламран лама куçса пытăр тесе тăрăшаççĕ. Ӳркенмеççĕ кинемисем, çывăхри «Славаш» вăрманне йĕлтĕрпе ярăнма, Тăвайне шыва кĕме çӳреççĕ. Спортпа туслă пулни сывлăха çирĕплетнине, ĕмĕре вăрăмлатнине пĕлеççĕ вĕсем. Чун-чĕре юрланă чухне, çемьере, кил-йышра, тăван-пĕтенпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ чухне мĕншĕн савăнас мар?

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ФЕСТИВАЛЬ



## Раштав çăлтăрĕ

**Кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнче Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институтĕнче «Раштав çăлтăрĕ» республика фестивалĕ 14-мĕш хут иртрĕ. Унта Чăваш митрополийĕн вырсарни шкулĕсен пултарулăх ушкăнĕсем хутшăнчĕç. Ку мероприяти Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава, Шупашкар епархийĕн тĕн вĕрентĕвĕн тата катехизаци пайĕ, «Милостивая» ыркăмăллăх православи фончĕ пил панипе иртет.**

Фестиваль Варнавăн видеосаламĕпе уçăлчĕ. Çавнашкалах Шупашкарти Тĕн училищин протоирейĕ Михаил Иванов, Гурий /Данилов/ Архимандрит, «Раштав» ыркăмăллăх фончĕн ертӳçи Зинаида Паршагина сăмах илчĕç, ачасене уявпа саламларĕç.

Республикăри 400-е яхăн вĕренекен хăйĕн ăсталăхне кăтартрĕ. Донбасс ачисем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Уява хутшăнакансем киле пылак çимĕçсем, ӳкерчĕклĕ журналсем илсе кайрĕç.

Ку фестиваль «Раштав» ыркăмăллăх фончĕ пулăшнипе йĕркеленине палăртса хăварас килет. Вăл социаллă пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçа кĕртмешкĕн грант çĕнсе илнĕ.

2002 çултанпа фестивале вырсарни тата вăтам шкулсенчи 200 ытла ушкăн, 5 пин ытла вĕренекен хутшăнчĕ. Çак ачасемех «Миссионеры света и добра» проектпа, «Милосердие» акципе хосписсене, ача çурчĕсене, больницăсене, ветерансен çурчĕсене, ваттисемпе сусăрсен интерначĕсене çитрĕç. Вĕсене валли пирĕштисем – вырсарни шкул вĕренекенĕсем – концерт, спектакль хатĕрлерĕç.

«Раштав çăлтăрĕ» фестивале хутшăнакансене пурне те тав тăватăп. Çитес çул та пĕрле пуласса шанатăп.

**Зоя ТОКАРЕВА,**
**проект ертӳçи тата**
**«Милостивая» фонд председателĕ.**

УЯВ КУНĔСЕМ

## Чăвашсем мĕнле канаççĕ?

**Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсенче республикăри 1700 мероприятие 500 пине яхăн çын хутшăннă. Çак вăхăтра культура учрежденийĕсем 9 миллион тенке яхăн укçа ĕçлесе илнĕ.**
**Кăрлачăн 3-7-мĕшĕсенче йĕркеленĕ «Пĕр район юмахĕ» проект нумайăшĕн асĕнче юлни иккĕлентермест. Малтанхи кун Сĕнтĕрвăррисем хăнасене йышăннă. Мероприятисем купсапа мещен тата хресчен кил-çурчĕн музейĕнче иртнĕ. Уява килнисен балра савăнма май килнĕ. Тетте хатĕрлес тĕлĕшпе ăсталăх класĕсем йĕркеленĕ. Вадим Шипунов художник-геральдистăн ĕçĕсемпе паллашма май килнĕ. Музейăн авалхи залĕсене кĕртсе кăтартни, хула историйĕпе тата халапĕсемпе, çынсен кун-çулĕпе, несĕлсен йăли-йĕркипе паллаштарни те хальхи ăрушăн пĕлтерĕшлĕ.**

Нарат Чаккинчи Даньковсен хăна çуртĕнче те пысăк йыша ăшшăн кĕтсе илнĕ. Унта вутă çурма, çăлтан шыв ăсса килме, мунча хутма, наци апат-çимĕçне хатĕрлеме май килнĕ.



Вăрман Пилемĕчри Татьяна Ефимова тăмран Çĕнĕ çул сувенирĕ тума вĕрентнĕ. Хăнасем Шуршăлти СССР космонавт летчикĕ А.Г.Николаев ячĕллĕ Мемориал комплексĕнче пулса курнă.

Кăрлачăн 4-мĕшĕнче Етĕрнери «Сурские зори» турист базинче çунапа, çунашкапа ярăнса савăннă, хоккейла вылянă. Нумайăшĕ çемйипех килнĕ çакăнта. Арçынсем сунара кайма, пулă тытма вăхăт тупнă.

Уява хутшăнакансем Етĕрнери таврапĕлӳ музейĕн экспоначĕсемпе паллашнă, СССР халăх артисчĕн Николай Мордвиновăн çуртĕнче «Великий Мордвинов» фильм курнă.

Чăваш ялĕсенче ĕлĕк мĕнле каннă-ши? Ун пирки Хĕл Мучин Тури Ачакри резиденцийĕнче пулса курнисем пĕлеççĕ. Кунта ятарласах «Хресченĕн хĕллехи йăпанăвĕсем» программа хатĕрленĕ.

Шупашкар районĕнчи Станьял этнокомплексĕнче наци апат-çимĕçĕ пĕçернĕ. «Ĕмĕт çулăмĕ» çутни те – хăйне май паллă. Вăл япăххи çинчен манмаллине тата лайăххине кĕтмеллине пĕлтерет.

Район центрĕнчи «Бичурин тата хальхи вăхăт» музейра «Непокорный монах» фильм кăтартнă.

Çĕнĕ Шупашкарти тĕп мероприятисем лаша спорчĕн шкулĕнче иртнĕ. Унта «Çĕнĕ çул кубокĕ» конкурс йĕркеленĕ. Уява хутшăнакансем юмах сăнарĕсене çавăрннă.

Скандинави уттине килĕштерекенсен фестивалĕнче 300 ытла çын старта тухнă. Пасар çуртĕнче Раштав ярмăркки ĕçленĕ.

Кăрлачăн 7-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи хĕрарăмсен Тихвин Турă амăшĕн мăнастирĕнче Христос çуралнине мухтаса кĕлĕ вуланă.

Чăрăш тавра юрласа-ташласа иртсе кайрĕç уяв кунĕсем.

### Пăр керменти уяв

Тĕп хулари «Шупашкар-Арена» пăр керменĕнче республика Пуçлăхĕн Раштав елки иртнĕ. Унта 4 пин ытла ача пуçтараннă. Лайăх вĕренекенсем, олимпиада, конкурс, спорт ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçисем, общество ĕçĕнче палăрнисем тата йывăр лару-тăрăва лекнĕ ачасем килнĕ çак уява.

«Ачасен асра юлакан çутă самантсем ытларах пулччăр. Çав вăхăтрах эпир çитĕнекен ăрăва чун пуянлăхĕпе культура йăли-йĕркине хаклама вĕрентсе пырăпăр», – тенĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ача-пăчана тата вĕсен ашшĕ-амăшне Çĕнĕ çулпа тата Раштавпа саламласа.

Уявра Екатеринбург хăнисем куракансене «Щелкунчик на льду» шоупа тыткăнланă.

**Марина ТУМАЛАНОВА**
**хатĕрленĕ.**

ПРАВО ХУРАЛĔНЧЕ

# «Йăхран хушамат çеç мар, кăмăл-сипет, шухăшлав та куçать»

**Кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче прокуратура ĕçченĕсем професси уявне паллă турĕç. Кăçал саккунлăх хуралĕ йĕркеленнĕренпе 294 çул çитрĕ. Çак сăлтавпа эпир те Шупашкарти Мускав район прокурорĕпе Александр Толстовпа курса калаçрăмăр.**



**– Эсир кăçал «Прокуратурăн хисеплĕ ĕçченĕ» ята тивĕçрĕр. Çакна сирĕн ĕçе хакланă пек е хушма яваплăх тиенĕ пек йышăнатăр?**

– Халăхра «награда хăйĕн хуçине тупрĕ» теççĕ. Паллах, çакă манăн кулленхи ĕçе хакланине палăртать. Çав вăхăтрах шаннине те тÿрре кăлармалла. Лайăххах, кăсăклăрах ĕçлемелле. Йĕркене, граждансен правине пăснине вăхăтра асăрхамалла.

**– Саккунпа, йĕркелĕхпе çыхăннă май сирĕн ĕç типĕрех пек туйăнать. Кăсăкли пур-и вара?**

– Ĕç чăннипех кăсăклă, мĕншĕн тесен кивĕ йĕркесенчен çĕннисем çине куçмалла. Халĕ пур çĕрте те модернизаци пырать. Саккунсем те улшăнсах тăраççĕ. Шаблон майĕпе ĕçлеме çук, пурнăç улшăннă май пирĕн те унпа тан пыма тивет. Компьютер технологийĕсем, Интернет аталаннă май халăх та ăсланать.

**– Çĕнĕ технологисем пĕр енчен пурнăçа çăмăллатаççĕ-ха. Интернет анлă сарăлни вара сирĕн ĕç калăпăшне те ÿстерет-çке.**

– Паллах. Чылайăшĕ шăпах тĕнче тетелĕнче экстремизма, терроргла материалсен вырнаçтарать. Наркотик сарасси пирки те Интернетра информаци нумай. Çавăнпах тимлĕхе пĕр самантлăха та çухатма юрамасть.

**– 2015 çул мĕнпе асра юлчĕ?**

– Чи малтанах Калинин район прокурорĕнче 9 çул ытла ĕçленĕ хыççăн Мускав район прокуратурине куçнипе. Кунта халăх та йышлăрах пурăнать. Ку ĕç маншăн çĕнĕ мар-ха, анчах урăх коллектив. Çакă иртнĕ çул асра юлакан пĕрремĕш пысăк пулăм. Ĕçри кăтартусем те аван. Çакна шута илсех пысăк наградăпа хавхалантарчĕç те кăçал.

**– Право хуралĕнчи сирĕн ĕç мĕнрен пуçланнине аса илсен те юрать пулĕ.**

– Шкул пĕтерсен 1988 çулта Саратоври юридици институтне вĕренме кĕтĕм. 1993 çултан пуçласа Шупашкарти Ленин районĕнчи прокуратурăра следователь, аслă следователь, Шупашкар прокурорĕн аслă пулăшуçи, Ленин район прокурорĕн заместителĕ, Калинин район прокурорĕ пулса ĕçлерĕм.

**– Следовательтен пуçланă эсир. Унăн ĕç тĕллевĕ раснарах. Каçарăр та, прокурор е следователь ĕçĕ кăсăкларах?**

– Следователĕн ĕçĕ урăхларах: тĕрĕслевирттермелле, ĕç пуçармалла, тĕпчемелле. Прокурорăн ĕçĕ анлăрах, яваплăрах. Следстви ĕçĕпе çеç çырлахмастпăр-çке, пурнăçăн мĕнпур сферине пырса тивекен саккунсем епле пурнăçланнине тĕрĕслемелле, йĕркесĕрлĕхе сирмелле. Пурне те курмалла-асăрхамалла.

**– Час-часах аса килекен самантсем те сахал мар ĕнтĕ.**

– Асра юлаканнисем, чăн та, пур. Шутлă вĕсем. Ытларах пысăк инкексем-тĕр. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче, эпĕ следовательте тăрăшнă чухне, виçĕ тантăш хăйсен çул çитмен тусне вĕлернĕччĕ. Юлташĕн амăшĕ кĕрĕкне сутасса пĕлсен укçине вăрлама тĕв тунă вĕсем. Вĕлернĕ йĕкĕтĕн амăшĕ тĕрмене 9 çуллăха хупнăскерне тухасса кĕтсе укçа пухса пăшал туяннăччĕ. Кÿренĕвне, чун ыратăвне каçарайман вăл, миçе çул йăтса çÿренĕ...

Иккĕмĕшĕ те 20 çул каяллах пулнăскер. 38 çулти хĕрарăмпа унăн 2 çулти ывăлĕн виллине тупнăччĕ ун чухне. Хĕрарăм нумай çул ача çуратаймасăр асапланнă хыççăн çеç «анне» ята илтме пултарнă. Уголовлă ĕçе тишкернĕ хыççăн преступлени ача амăшĕ туни палăрнăччĕ. Юлташĕпе иккĕшĕ эрех ĕçнĕ хыççăн хĕрарăма çаратма шут тытнă, çав тĕллевпех ăна пăвнă та. Ача йĕме тытăнсан, ан шавлатăр тесе, ăна та минтерпе хупланă. Ытларах чухне çакăн пек инкексем асра юлаççĕ те, лайăххи сĕвĕрĕлет.

**– Эсир çитĕннĕ вăхăтра кашни каччă салтакра пуласси тĕп тивĕçĕ тесе шухăшланă. Ăна пурнăçланă эсир. Ун чухне прокурор пуканне йышăнма ĕмĕтленнĕ-и?**

– 1968 çулта çуралнă эпĕ. Ачалăх çăмăл çулсенче килмен. Ĕçпе писĕхнĕ эпир. Анне фермăра ĕçлетчĕ, атте те колхозраччĕ: малтан электрик, каярах бригадир. Ун чухне эпир прокуратура пуррине те пĕлмен. Ĕçленĕ. Аттепе аннене пулăшнă, каникулсенче те уй-хиртен тухма пĕлмен. Пĕрремĕш тĕллев, чăн та, салтака каясси пулнă. Пурин те. Унсăрăн хăяккăн пăхатчĕç. Пирĕн ялтан, Элĕк районĕнчи Атмалкассинчен, республикăри ШĔМре Леонид Шленский ĕçлетчĕ. Шăпах вăл Саратоври юристсен институтне вĕренме кĕме сĕнчĕ те. Кĕтÿ пăхнă май кĕнекесем вуларăм та экзаменсене ăнăçлă тытса студент пулса тăтăм.

**– Çемье пирки те пĕлес килет.**

– Анне Людмила Никандровна сывă-чиперех пурăнать-ха, кăçал 73 тултарать. Чăх-чĕп тытать. Май тупăнсанах хăнана çитсе ăна пулăшма тăрăшатпăр. Аттене Иван Алексеевича 2001 çулта пытартăмăр. Тăватă ачаран çемьере асли эпĕ. Икĕ шăллăмпа йăмăк пур, вĕсем урăх сферăра тăрăшаççĕ. Хамăн ывăл çитĕнет, 3-мĕш курсра юридици пĕлĕвĕ илет, тăрăшать, ашшĕ çулĕпе каяс кăмăлне палăртать.

**– Династи пулать эппин?**

– Династи тĕрĕс те сумлă тесе шухăшлатăп эпĕ. Йăхран хушамат çеç мар, кăмăл-сипет, шухăшлав та куçать. Ачасен пирĕнтен лайăххах пулмалла, ырă та пархатарлă ĕç ытларах тумалла. Çакăн пирки ĕмĕтленетĕп те: вăрçă ан пултăр та ачасем пирĕнтен лайăххах пурăнччăр.

**– Пушă вăхăт пулать-и сирĕн?**

– Ăна тупма пĕлмеллех. Унсăрăн ĕçре тымарланса ларатăн та йĕри-тавра мĕн пулса иртнине курма пăрахатăн. Хушăран юлташсемпе те тĕл пулмалла, пулни-иртнине хавасланса аса илни те хавхалану хушать. Çемьене те тимлĕх уйăрмалла. Пурте виçеллĕ пулмалла. «Вăхăт çук» тенине йышăнмастăп. Кăмăл çеç кирлĕ.

**– «Ачасен пирĕнтен лайăххах пурăнмалла» терĕр. Людмила Никандровна та сирĕн çитĕнĕвĕрсемпе савăнать-тĕр?**

– Чи малтанах, паллах, ку уншăн пысăк парне. Вăл питĕ хĕпĕртет.

**– Калаçушăн тавах сире.**

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.

ТĔРĔСЛĔХШĔН

# Следстви пĕр ыйтăва та куçран вĕçерттмест

**Раççей Следстви комитечĕ йĕркеленнĕренпе кăрлачăн 15-мĕшĕнче 5 çул çитрĕ. Уяв тĕлне Шупашкарти тĕрлĕ районти следстви пайĕсем иртнĕ çул епле ĕçленине пĕтĕмлетрĕç.**

## Мускав районĕ

2015 çулта кăна следовательсем уголовлă 182 ĕçе производствăна кĕртнĕ. Вĕсенчен 115-шне вĕçне çитернĕ, тĕрлĕ суда уголовлă 102 ĕç ярса панă. Пуçарнăскерсенчен çурри ытла йывăр тата уйрăмах йывăррисен йышне кĕрет.

Пĕлтĕр Мускав районĕнчи следстви пайне тĕрлĕ преступлени туни çинчен 652 хутчен пĕлтернĕ. Вĕсене тĕрĕслесси те ансат мар, уголовлă ĕçсене тишкернĕ евĕрех.

Следстви иртterme халăх та хастар хутшăнать. 2015 çулта РФ СКЧР управленийĕн «шанăç телефонĕ» 8(8352)58-05-82 урлă районе пайне граждансен – 4, Интернетри йышăну пÿлĕмĕ урлă 4 ыйтăвĕ çитнĕ. Пурне те тивĕçлĕ шайра пăхса тухнă.

Граждансене куллен уйрăммăн йышăнассине аван йĕркеленĕ. Иртнĕ çул следовательсем патне 161 граждан пынă, вĕсенчен 11-шне следстви пайĕн ертÿçи, 23-шне унăн заместителĕ йышăннă.

## Ленин районĕ

Иртнĕ çул тĕрлĕ преступлени туни пирки 588 хутчен пĕлтернĕ. Следовательсем 184 уголовлă ĕç пуçарнă. Преступленисен пĕтĕмĕшле тăкакне 625 миллион тенкĕпе танлаштарнă, следовательсем тăрăшнипе 426 миллион тенке каялла тавăрма пултарнă.

Çынсене вĕлернĕ е сывлăхне сиен кÿнĕ инкексене уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. 2015 çулта Ленин районĕнче кăна çын вĕлернĕ тата вĕлерме хăтланнă 15 тĕслĕхе палăртнă. 8-шĕ асăрханмасăр тунăскерсем.

Малтанхи çулсенче тунă преступленисене уçăмлатассипе те çине тăрса ĕçлеççĕ. Акă, сăмахран, 26 çулти йĕкĕт тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе уçăмлатнă. 2011 тата 2012 çулта 39-ти тата 20-ри хĕрхĕрарăма çаратса мăшкăлланăшăн 8 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă ăна. Айăпланакан авланнине, пĕчĕк ачи пуррине палăртмалла.

Йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене уçăмлатас тĕлĕшпе следовательсене паянхи çĕнĕ мелсемпе технологисем те çăмăллăх кÿреççĕ. «Суя детекторĕ» уйрăмах анлă пулăшать. 7 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă 26 çулти йĕкĕте те çак меслетпех «калаçтарнă». 53 çулти пĕлĕшĕ çухалсан хĕрарăм кун пирки право хуралĕн органĕсене пĕлтернĕ. Ара, арçын чирлемен, ниçта кайма та палăртман. Тишкернĕ хыççăн арçынна çÿлерех асăннă йĕкĕт вĕлерни палăрнă.

Коррупципе çыхăннă ыйтусене те куçран вĕçертмеççĕ следовательсем. Следстви пайне иртнĕ çул коррупципе çыхăннă ĕç-пуç пирки 17 хутчен пĕлтернĕ, судсене 27 ĕç-пуçа пăхса тухма ыйту янă.

Право хуралĕн ытти органĕсемпе тачă çыхăнса Ленин районĕн следстви пайĕ Шупашкарти преступлени тăвакан ушкăнсене тупса палăртассипе те тимлĕ ĕçлет. Çапла пĕлтĕр кунашкал 5 çынран тăракан 1 ушкăна чарнă. Хăрушсăрлăх нормине тивĕçтермен продукцие çаврăнăша кĕртнĕскерсен тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе малалла тишкереççĕ.

Çул çитменнисем тантăшĕсен тĕлĕшпе тунă уголовлă ĕçсене тишкерессине те тĕп пĕлтерĕшлĕ. 18 тултарман хĕрсемпе яшсем тунă хăть те мĕнле йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене те следстви пайĕ тишкерет.

Акă 16 çулти яш тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе уçăмлатнă. Пĕлтĕрхи ака уйăхĕнче вăл 9 çулти çыварăкан шăллĕне çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ. Ашшĕпе амăшĕ çак вăхăтра юнашар пÿлĕмре çыварнă. Каччăна психика тĕлĕшĕнчен чирлĕ тесе палăртнă, обществошăн хăрушлăх кăларса тăратакан-скерне вăйпах сиплеме йышăннă.

Пĕтĕмĕшле Ленин районĕнче пĕлтĕр 32 çул çитмен çамрăк инкек тÿснĕ.

Следстви управленийĕнче «Ача хăрушлăхра» телефон – 8(8352)45-23-99 – талăкĕпех ĕçлет. Унта килнĕ кашни шăнкăравах тĕрĕслеççĕ.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Суйнишĕн те айăпласçĕ

**Террористла акт тума хатĕрленни, сăмахран, бомба хуни пирки, суйса пĕлтернишĕн епле айăпласçĕ-ши?**

**И.ИВАНОВ.**

Халăх нумай çÿрекен вырăна сирпĕтме, çунтарма, çын пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан е пысăк тăкак кÿрекен ытти инкек тума хатĕрленни çинчен суйса пĕлтернишĕн РФ Уголовлă Кодексĕн 207-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа 3 çул таран ирĕклĕхсĕр хăварма пултараççĕ. Çакнашкалах суя хыпаршăн, анчах ăна сирме укçа-тенкĕ нумай тăкакланнă е ăна пула урăх инкек тухсан айăплав вăхăчĕ 5 çул таран тăсăлма пултарать.

**А.ГРОМОВ,**
**Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Пулă рулечĕ



**500 грамм пулă фаршĕ, 200 грамм ветчина, 100 грамм услам çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Тирĕнчен, шăмминчен тасатнă пулла аш арманĕ витĕр кăлармалла. Ăна тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Вĕттĕн туранă ветчинана пулă фаршĕн çуррипе хутăштармалла. Çак хутăша ăшаламалла. Пулă фаршĕн тепĕр пайне апатсимĕç çатăрки çине сармалла. Ăна ăшаланă хутăшпа витмелле. Рулет майлă çавăрса çатăркана икĕ енчен çыхмалла. Пулă рулетне духовкăра пĕçермелле.

### Аçтăрхан мăйăрĕпе пĕçернĕ скумбри

**1 скумбри, 1 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ, 1 апат кашăкĕ сар пăрăç, 2-3 апат кашăкĕ аçтăрхан мăйăрĕ, 70 грамм сыр, 1 апат кашăкĕ майонез кирлĕ.**

Скумбри ăшне кăлармалла, пуçне касмалла. Пулла шăмăран тасатмалла. Çиелтен тăвар сапмалла, лимон сĕткенĕ сирпĕтмелле, сар пăрăç сĕрмелле. Вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕпе теркăланă сыр хурса пулла çиппе çыхмалла, фольгапа çавăрмалла. Скумбрие духовкăра 20 минут пĕçермелле.

### Пĕтнĕк пĕремĕкĕ

**4 çăмарта, 350 грамм сахăр, 150 грамм услам çу, ванилин, 5-7 тумлам пĕтнĕк çăвĕ, 1 апат кашăкĕ пыл, 1 чей кашăкĕ апат соди, 350 миллилитр турăх, 1 килограмм çăнăх, 100 грамм сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

2 çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла. Шуррине крем валли хăвармалла, саррине 2 çăмартапа пĕрле пăтратса кăпăклантармалла, сахăр, пĕтнĕк çăвĕ хушмалла. Апат содипе хутăштарнă пыла çăмарта хутăшне ямалла. Турăх, çăнăх хушса чуста çăрмалла. Шывпа йĕпетнĕ алăпа çаврашкасем тумалла. Пĕремĕке 20 минутлăха духовкăна лартмалла. Писнĕ вăхăтра 2 çăмарта шуррине сахăр çăнăхĕпе пăтратмалла. Вĕри пĕремĕке çак крема сĕрмелле.

### «Юмах» коктейль

**125 миллилитр лимонад, 2 апат кашăкĕ мороженăй, 10 грамм шăккалат кирлĕ.**

Стакана лимонад ямалла. Çиеле мороженăй хумалла, теркăланă шăккалат сапмалла. Пăтратсан мороженăй кăпăкланать. Çакă ачасене уйрăмах килĕшет.

### «Зебра» торт

**2,5 стакан çăнăх, 2 стакан сахăр, 1 стакан хăйма, 3 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, 150 грамм услам çу, 2 апат кашăкĕ какао кирлĕ.**

Çиеле сĕрме 100 грамм шăккалат, 30 грамм услам çу, 4 апат кашăкĕ сĕт, 2 апат кашăкĕ сахăр хатĕрлемелле.

Ирĕлтернĕ услам çăва хăймапа, çăнăхпа, сахăрпа, çăмартапа, апат содипе пăтратмалла. Чустана икĕ пая уйăрмалла. Пĕрне какаопа хутăштармалла. Чустана черетлесе çатмана хумалла. Духовкăра 20-25 минут пĕçермелле.

Çиеле сĕрмелли çимĕçсене вĕреме кĕртмелле. Çак хутăшпа торта витмелле.

### Пĕвер катлечĕ

**500 грамм сысна пĕверĕ, 120 грамм салă, 4 апат кашăкĕ сĕлĕ хăрпăкĕ, 100 миллилитр сĕт, 3 шăл ыхра, 2 апат кашăкĕ çăнăх, тăвар, пăрăç, олива çăвĕ кирлĕ.**

Сĕлĕ хăрпăкне 20 минутлăха сĕте ярса лартмалла, унтан пăрмалла. Пĕвере салăпа, ыхрапа пĕрле аш арманĕ витĕр кăлармалла. Сĕлĕ хăрпăкĕ, çăнăх хушмалла, тăвар, пăрăç сапмалла. Çак хутăша тип çу янă çатмана кашăкпа илсе хумалла.

### Апельсинпа, тăпăрчпа

**4 апельсин, 400 грамм тăпăрч, 2 çăмарта, 150 грамм сахăр, 1 апат кашăкĕ сĕт, 150 грамм услам çу кирлĕ.**

Апельсина çурмалла касмалла, ăшне кăлармалла. Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, сĕт хушса вĕреме кĕртмелле. Сивĕнсен тăпăрчпа, вĕттĕн туранă апельсинпа, услам çупа хутăштармалла. Çак хутăша апельсин чашăкне тултармалла.

### Çăратнă сĕтпе печени

**1 килограмм кăпăрка печени, 200 грамм услам çу, 2 банка çăратнă сĕт, 2 апельсин, 3 мандарин кирлĕ.**

Вĕтетнĕ печение туранă апельсинпа, мандаринпа хутăштармалла. Ирĕлтернĕ услам çу, çăратнă сĕт ямалла. Çак хутăша 2-3 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

ЧӐРЕЧЕ АНИНЧЕ

## Хĕлле те тимлĕх кирлĕ

**Пÿлĕмри чечексем пурăнмалли кĕтесе хăтлăланисĕр пуçне органика япалисем кăларса сывлăша нÿретеççĕ. Хăшĕ-пĕри халăх мелĕпе сипленме те пулăшать.**

Çеçке çуракан ÿсен-тăрана хĕлле хушма çутă кирлĕ.

Енчен те чечек ытла çитĕнсе кайнă тăк – ăна касмалла. Çакă ăна тĕмленсе ешерме май парать. Турата çулçă тухакан вырăнтан касса илмелле. Хĕлле ÿсен-тăран канать, çавăнпах çак ĕçе пурнăçлама чухах.



Пÿлĕмри чечексем ытлашши ăшша килĕштермеççĕ. Витĕр çил те вĕсемшĕн сиенлĕ.

Ӳсен-тăрана пĕр вĕçĕм шăварма юрамасть. Пÿлĕм температуринчен ăшăрах шывпа усă курмалла. Чечексене çуркуннеччен имçамламалла мар. Чÿлмеке хутран-ситрен çавăрмалла.

СЫВЛĂХ

## Шăнса чирлесен...



**Тĕрĕс апатланни организма инфекципе кĕрешме тата иммун тытăмне çирĕплетме пулăшать. Çиес килмесен хăвăра ирĕксĕрлемелле мар. Малтанхи кунсенче ытларах ĕçмелле. Курăк чейĕ, улма-çырла морсĕ хатĕрлĕр, кĕсел вĕретĕр. Вăй илнĕçемĕн яланхи режима куçмалла. Кунне 5-6 хут сахалшар çини пĕлтерĕшлĕ. Пăтă, хăпарту, яшка уйрăмах усăллă.**

Ăшаланă, пăрăçлă, тăварлă апат çимесен лайăхрах. Вăл шыçса тăртаннă сывлав çулне усал витĕм кÿрет. Канфет, майонез, чипс та вăй хушмĕç. Чирленĕ вăхăтра пахалăхлă, витаминсемпе тата микроэлементсемпе пуян апат суйламалла.

**Белок.** Çын организмĕнчи клеткăсем ылмашăнса пыраççĕ. Кивви вырăнне çĕнни çуралтăр тесен чи малтанах белок кирлĕ. Çавăнпах чăх, пăру, кăркка какайĕ, пулă çимелле.

**Чăх яшки.** Чир вăхăтĕнче чăх яшки те витĕмлĕ. Вăл нейтрофилсене аталанма чăрмантарать. Шăпах çав клеткăсене пула çын сунаслама пуçлать, пыр шыçать.

**С витаминлă çимĕç.** Лимон, апельсин, мандарин, пылак пăрăç, помидор, шпинат, хĕрен, купăста, хура хурлăхан, сырлан, киви организма чире çĕнтерме пулăшĕç. Унсăр пуçне киви, сăмахран, аппетита уçать.

**Ыхра.** Çак çимĕçри аллицин бактерисене пĕтерет.

**Техĕмлĕх.** Импĕр, корица, сар пăрăç, кориандр витĕмĕпе тар тухать. Унсăр пуçне юн тымарĕсем пĕрĕнеççĕ, çавна май сывлама тата çăтма çăмăлланать.

**Йÿçнĕ сĕт çимĕçĕсем.** Тăпăрч, йогурт, турăх пыршăлăх ĕçне йĕркелеççĕ.

Кофе, эрех ĕçмелле мар. Вĕсем вăй илме пулăшаймĕç.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Тĕрĕс сумалла

Ĕне пăруланă хыççăнхи яваплă самантсенчен пĕри – тĕрĕс сăвасси. Çиллине чĕччине амантмасăр пушатасси пĕлтерĕшлĕ, унсăрăн вăл шыçма, юнăхма пултарать. Ку тĕллевпе çилле ăшă шывпа çуса типĕтнĕ хыççăн массаж тусан аван. Юн çаврăнаслăхĕ лайăхланĕ те сĕт анма тытăнĕ. Унри çу виçи кашни сумассерен ÿссех пырать. Лайăх пăхсан ĕне хуçине сĕт виçипе те, пахалăхĕпе те савăнтарĕ.

Пăруланă хыççăн ĕне çиллине икĕ хутчен – сăвиччен тата сунă хыççăн – массаж тумалла. Малтанах сылтăм пайне ачашламалла. Ăна икĕ алăпа тытса чĕччипе çиллине ачашланă май çÿлелле çĕклесе аялалла антармалла. Ун хыççăн сулахай пайне куçмалла.

Халĕ ĕнене сума та юрать. Çиллине тĕппипех пушатмалла, сĕте лайăх суса пĕтермелле. Шăпах юлашки тумламсенче çу виçи пушшех пысăк. Тепĕр хутчен массаж тунă хыççăн çилле лайăх типĕтмелле те чĕччине çу е вазилин сĕрмелле.



## Сурăх ан уксахлатăр

Хĕлле сурăхсене улăм сарса параççĕ. Çемçе çĕрте вĕсен чĕрни хырăнмасть, çавна май çитĕнсе çуркаланать. Ăна вăхăтра йĕркене кĕртмесен килти выльăх уксахлама пуçлать.

Çакă чĕрнери суранпа çыхăннă. Ку вырăн çĕрме пуçлас хăрушлăх та пур. Унран сипленме вара çăмăл мар. Ку чир ыттисене те куçать. Çавна май путек, тĕслĕхрен, япăх çитĕнет, чирлет.

Сурăх чĕрнине çулталăк тăршшĕпех сăнаса тăмалла. Ытлашшине касмалла та çак вырăна 5 процентлă уксус тата 5 процентлă формалин хутăшĕ сĕрмелле.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

## Халех симĕс апат хатĕрлетпĕр

**Килти выльăх çаранта симĕс курăк çиме пуçласанах улшăнать. Унăн çăмĕ ялкалать, сывлăхĕ çирĕпленет. Симĕс апат кайăк-кĕшĕке те вăй кĕртет. Çапах мĕншĕн çанталăк ăшăтасса, тавралăх симĕс курăкпа витĕнессе кĕтмелле? Ешĕл çимĕçе хĕлле килтех çитĕнтерме пулать.**

Симĕс апат хатĕрлемешкĕн тĕрлĕ культурăпа – урпапа, сĕлĕпе, куккурупа, пăрçапа, тулăпа... – усă курма пулать. Викăпа урпа, пăрçапа урпа хутăшĕсем те килти выльăхпа кайăк-кĕшĕкшĕн питĕ усăллă. Акиччен вăрра пĕр уйăхран кая мар ăшă пÿлĕмре тытмалла.

Малтан ăна лайăх çуса 2 сехетлĕхе марганцовка хутăшне ямалла. Унтан 15 сантиметр хулăнăш сарса марлăпа е пирпе витмелле.

Талăкран вăрă шăтма пуçлать. 6-8 сантиметр çÿллĕш ещĕксем пур-и? Вĕсен тĕпне тата айккине çатăрка сармалла. Сывлăш кĕртме, шыв юхма темиçе çĕртен лезвипе касмалла.

Шăтарнă тырра е пăрçана ещĕк тĕпне 2 сантиметр хулăнăш сармалла. Ăна ăшă вырăна лартмалла. Вăрра нÿретме манмалла мар. Кунне 2-3 хут ятарлă хутăшпа шăварни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Çакнашкал хутăш хатĕрлеме пулать: 100 литр шывра 100 грамм азот йÿçекĕллĕ кали, 75 грамм суперфосфат, 16 грамм мочевина, 15 грамм кÿкĕрт йÿçекĕллĕ магни, 0,2 грамм бор йÿçекĕ, 0,2 грамм кÿкĕрт йÿçекĕллĕ марганец, 0,1 грамм кÿкĕрт йÿçекĕллĕ цинк, 0,1 грамм кÿкĕрт йÿçекĕллĕ пăхăр ирĕлтермелле. 50 литр шыва 100 грамм нитрофоска ямалла – ку ансат тепĕр тĕрлĕ хутăш.

Ещĕк тĕпне шыв юлмалла мар, унсăрăн вăрă çĕрме пуçлать. Çутă çĕрте тырă лайăх çитĕнĕ. 18-23 сантиметр çÿллĕш ÿсен-тăрана выльăха çитерме юрать. Кăларса иличчен талăк малтан ăна шăварма чарăнмалла. Çавна май вăл юлашки нÿрĕке туртса илĕ, апат пахалăхлă пулĕ.

Выльăха симĕс апатпа пĕрлех вăрă юлашкине те, тымарне те çитермелле. Тĕрĕс çитĕнтернĕ çимĕç вĕтетсен чĕрĕ хăяр шăршиллĕ пулĕ. Ку апата пĕр талăкра кайăк-кĕшĕке – 30 грамм, пăрăва, сысна çурине, путеке – 500 грамм, ĕнене 3-5 килограмм таран çитерме юрать.

1 килограмм тырăран 6 килограмм симĕс апат çитĕнтерме пулать. Ещĕкпе çатăркана марганец хутăшĕпе çусан ĕçе çĕнĕрен пуçăнма та юрать.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Çамрăк амăшĕ

Света – кулленхи пурнăçпа туллин киленме хăнăхнă хĕр. Ăна ашшĕпе амăшĕ çав тери юратса ӳстернĕ. Кĕскен каласан – тĕпренчĕкĕшĕн нимĕн те шеллемен.

Туй хыççăнах Светăн çывăх çыннисем парнеленĕ хваттере кусрĕ çамрăк мăшăр. Хĕрарăм çуралнă тăрăхрах ĕçе вырнаçрĕ, арçын вăрăм укçа шыраса ют хулана çул тытрĕ. Юрать-ха телефонпа çыхăну тытма пулать халĕ. Талăкне темиçешер сехет калаçса чунĕсене пусарчĕç вĕсем. Отпуск вăхăтĕнче иккĕшĕ пĕрле ют çĕршывра канма та май тупрĕç.

Пĕрре Света патне упăшкин тăванĕсем хăнана килсе çитрĕç. Хăйĕн япалисене ыйтмасăр тытнине юратмасть çамрăк арăм. Анчах пĕчĕк Арçука каласа ăнлантарăн-и? Унăн йăлтах пĕлес килет. Амăшĕ кухньăра апат хатĕрленĕ вăхăтра та шкапсене уçса пăхать вăл.

«Чунăм, эсĕ мана ăнланатăн вĕт. Йăлăхсах çитрĕм. Ĕç хыççăн канас килет, анчах хамăн килте те канăç çук. Арçук мана алăк патĕнче сыхласа тăрать тейĕн. Пӳлĕме кĕрсенех майăран уртăнать. Кайран пĕр утăм та юлмасть. Ялан вылямалла унпа. Кăшкăрашать, сăлтавсăрах йĕрет.

Япалисене ваннăна çакса тултараççĕ. Туалетра та ялан çын...» – макăрас пекех каласа кăтартать упăшкине Света. Арçын, паллах, ăна лăплантарать, кăштах та пулин чăтма ыйтать. Темиçе кунран хăнасем те йăлăхса çитрĕç ахăр – пуçтарăнса яла тухса кайрĕç. Тепĕр тесен, вĕсем яланлăхах килмен вĕт хулана.

«Сӳлти хутрисен будильникĕ тарăхтарать. Мĕншĕн манăн вĕсемпе пĕрле 6 сехетре вăранмалла тет вара?» – каллех вĕчĕрхенет хайхискер. Хăй каланă тăрăх, ун чухне Света сиксе тăрса тапăртатма пуçлать. Аялти хутрисем мĕнле йышăнаççĕ-ши çакна?

Светăн çие юлнишĕн эпир те, пĕлĕшсем, савăнтăмăр. Ача кĕтнĕ вăхăтра хăйне тата телейлĕрех туйрĕ вăл. «Манăн тарăхма юрамасть. Лайăххи çинчен кăна шухăшламалла. Илемлĕ япаласемпе киленмелле», – терĕ. Тĕрĕс, йĕри-тавра чуна тыткăнлаканнине курма хăнăхмалла.

«Ним тума та ĕлкĕрейместĕп. Хăш чухне япаласене пуçтарса хума та вăхăт çитмест. Кӳршĕсен будильникне тахçантанпах илтместĕп. Ирхине ачапа кăна вăранатăп», – нимĕн те пытармасть декрет отпускĕнчи Света. Пирĕншĕн тунсăхлать вăл, çавăнпах ĕçе тăтăш шăнкăравлать.

«Интернетра пĕр кулăш вуларăм. «Ирхине тăрсанах апат пĕçерме чупатăп. Кайран ачана çитеретĕп, унпа пĕрле уçăлма тухатăп. Татах пĕçеретĕп, килте тирпейлетĕп, тепĕр хут уçăлма тухатăп. Япала çăватăп. Каллех апат хатĕрлетĕп. Çӳç тураманнине каçхине кăна аса илетĕп», – çырнă унта. Ку шăпах ман çинчен», – кăмăлĕ лайăх çамрăк амăшĕн.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

АХ, АНЧАХ

# Арăм курман вăхăтра...

«Ăшшăнрах пăх-ха ман çине», – кушак аçи пекех мăрлатать ĕçтешĕм. Пилĕкрен ыталасшăн, пит çăмартинчен чуп тăвасшăн хăй. Аслă шкулта вĕреннĕ чухнех çапла вăрçтаратчĕ. Çак йăлана çаплипех пăрахаймасть. Ах, çав арçынсем! Арăм курман чухне çĕрĕ тăхăннине те манаççĕ. Ялан выляс килет вĕсен. Куç хĕссе, çепĕç сăмах каласа кăмăла çавăрасшăн.

Вăл хăйĕн çемйи пирки каласа кăтартма юратать. Нумаях пулмасть, сăмахран, пĕчĕк хĕрĕпе пĕрле сăвă хайланă. Тĕпренчĕкĕ е ашшĕ ытларах савăннă-ши çакăншăн? Тăватă çав йĕркене асра тытакан ача, паллах, юраман вырăнта çул урлă каçмĕ. Çак сăвăпа иккĕшĕ конкурсра та палăрнă.

Арăмĕ мĕнешкел хитре кĕпе илсе панă ăна. Ĕçри хĕрарăмсем те тӳрех асăрхарĕç. «Укçи хамăнччĕ-ха та», – тет йăл кулса кил хуçи. Çапла пуль-ха та, анчах килĕшӳллине арăм суйласа илнĕ.

Тем тесен те юратать вăл хăйĕн мăшăрне. Çемйи ытлă-çитлĕ пурăнтăр тесе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хатĕр. «Арăм ыйтнипе сухала та хырса пăрахрăм. Ăна чуптума чăрмантарать имĕш», – чунне уçать пĕлĕшĕм. Тĕрĕсех, çамрăк çынна сухалпа килĕшмест. Эпир каланине илтмĕш турĕ. Арăмĕн сăмахĕ мĕнле хаклă уншăн!

«Мăшăрăм шăнкăравларĕ. Кукăль пĕçернĕ. Эпĕ кайрăм», – ĕç вĕçленсенех киле вĕçтерчĕ вăл.

Мĕнех, ыранччен, тусăм!

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

ЧУНРИ

# Пĕччен те лайăх



Эсĕ мансăр пĕр кун та пурăнайманнине тахçантанпах пĕлетĕп. Ытти арçын çумне кĕвĕçнине те туятăп. Темĕн те сиксе тухать ку пурнăçра, кĕтмен çĕртен ĕçрен кайма тивнĕччĕ. Йывăр самантра алă тăсса параканни те никам та мар, эсех пултăн. Эпĕ шатăрр! хусăласран хăраса ир те каç лăплантартăн, йăпатрăн мана. «Çук» сăмаха илтсе курман санран халиччен. Эсĕ темле ӳкĕтлесен те çапах та ман хальлĕхе хамăн пĕчĕк тĕнчере пĕччен çеç пулас килет. Малашнехине тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа шăвакан вăхăт кăтартĕ. Турă çырнинчен иртеймĕн теççĕ. Сана хам çумран тĕксе те яраймастăп, çывăха та пыртараймастăп. Шикленнипе мар пулĕ ку. Çемье пурнăçĕ пачах та хăратмасть мана. Чун çапла ыйтать-ши? Пĕр эсĕ кăна ăнланатăн, кирек хăçан та пулăшма тăрăшатăн. Ырă ĕçÿсен шучĕ те çук. Кăмăлу тĕлĕнмелле уçă. Çакăншăнах килĕшетĕн те мана. Çук, ыттисем пек мар эсĕ. Суя смс-çырусем шăрçалама, пушă сăмах çаптарма, каппайланма юратмастăн. Уявра чечек çыххи пирки те манса каятăн-и тен? Кирлех те мар. Ахаль кун ним çукранах парнепе савăнтарни те кĕтменлĕх мар ĕнтĕ маншăн. Санпа епле паллашни куç умĕнчен те каймасть. Пысăк кăвак куç мĕнпе пăркăчларĕ-ши мана ун чухне? Турри ахальтен тĕл пултарман пуль çав пире. Шăпа çавнашкал килсе тухасса малтанах сиснĕн туйăнать.

Сивĕ кĕркуннеччĕ. Çумăрпа юр хутăшĕ пĕрĕхетчĕ. Каçа юлса аякри ялтан таврăнма тухрăм. Çул хĕрринче вăрах тăнăран тĕттĕмленме те ĕлкĕрчĕ, автобус вара çук та çук. Эпĕ ăçта çитнипе темиçе те кăсăклантăн. Санăн васкавлă ĕçсем пуррине пĕлсе чăрмантарас темерĕм ун чухне. Шеллерĕн, эпĕ чирлесрен хăрарăн, мĕнпур ĕçне шăллу çине тиесе мана илме вĕçтерсе çитрĕн. Хĕрарăмпа арçын юлташ пулма пултарайманаççĕ тесе ахалех калаççĕ мар-ши? Пĕлетĕп, тен, чылайлăха мар пулĕ. Эпир пĕр-пĕрне икĕ çул таранах пĕлетпĕр, паллах, ку хушăра юрату, çывăх хутшăнусем пирки пĕрре мар сăмах пуçарнă эсĕ. Ман çирĕплĕхĕмрен те нумай килет пулĕ çав. Ун пек чухне арçынсем теприн патне пăрахса тараканччĕ, эсĕ вара мана тата ытларах килĕштерме, хисеплеме тытăннăн туйăнчĕ.

Тĕкĕртен хам çине кашни ир тинкерсе пăхатăп, куçа тăрăнмалла питĕ илĕртӳллех те мар-çке эпĕ. Мĕн тупнă-ши эсĕ ман çумра? Мĕн канăç памасть сана? Ыттисем пекех эпĕ. Вăрăм çӳç, çинçе пилĕк... Пирĕн юлташла хутшăнусене хăшĕ-пĕри ĕненмест те пулĕ. Айккинче пăшăлтатнине те хăлхана чикме пăрахрăм. Çын сăмахĕшĕнех сана хам çумран тĕксе ярса пĕччен юлмалла-и халь? Урăхла пурăнма тытăнтăм эпĕ. Хам мĕнлине пĕлетĕп те, теприсен, усал чунлисен, сăмахне ăша хывмастăп. Сансăр та кичем, çав вăхăтрах пĕччен те лайăх мана.

**ИРИНА.**

Шупашкар хули.

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Хăрарăм-ши, вăтантăм-ши?



Çак çĕр çинче эпĕ тăр-пĕччен. Ĕçрен – киле, килтен ĕçе çӳретĕп. Кашни кун çавнашкал иртнишĕн чун хурланать. Мĕнешкел кичем пурнăç, хĕллехи вăрăм каçсенче хăть уласа йĕр. Мĕскĕн кушак кăна пăрахмасть мана, каçхине алăк умĕнче ачашланса кĕтсе илет, ирхине кусран пăхса ăсатса ярать. Çывăх тус-юлташăм та çук. Кĕçех 50 çула çывхаратăп. Çамрăк чухне мĕн çинчен шухăшланă-ши? Эх, чавса çывăх та çыртма çук çав. Çемье çавăрма эпĕ те пултарнă-çке. Чипер те илĕртӳллĕ тесе калаймастăп хам пирки. Вăрăм та хитре ураллă та, яштака кĕлеткеллĕ те мар. Сăнпа та çамрăк курăнмастăп. Çапах та çав териех сăнсăр катемпи мар-çке. Качча каймасан та вăхăтĕнче ача çуратма пултарнă хам валли. Пепкене çут тĕнче парнелени çылăх-и вара? Ăс паракан та пулман-ши мана е çемье çавăрмасăрах ача çуратма вăтаннă-ши? Анне пурнăçран уйрăлса кайнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Йывăр чире сĕнтерейменрĕ вăл. Пиччесемпе шăллăмсен – хăйсен пурнăçĕ. Аттепе йăпанкаласа пурăнаттăм-ха, Çĕнĕ çула та кашнинчех пĕрле кĕтсе илеттĕмĕр. Унăн та юлашки вăхăтра сывлăхĕ хавшарĕ. Çывăх çыннăм больницăран та тухаймасть. Ĕçре те никампа та пĕр чĕлхе тупаймастăп. Кашниех çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Тĕпренчĕкĕсем пирки сăмах хускатсассăн çăвара шыв сыпнăн ларатăп е пӳлĕмрен тухса каятăп. Телей валеçнĕ кун эпĕ килте пулман-тăр çав. Анне те, ватă кукамай та пил паратчĕ, вĕсен чунран калана сăмахĕсене Турă илтмерĕ-ши? Кирек мĕн тесен те, хĕрарăма ача кирлĕ. Аякра пурăнсан та çулталăкра пĕрре те пулин килсе кайма вăхăт тупатех, шăнкăравласа тунсăха пусаратех вăл. Çулсем иртнĕçемĕн кама кирлĕ пулăп-ши эпĕ? Нимĕн те мар, ватлăхри пĕчченлĕх хăрататъ мана. Сăнсăр та пĕркеленчĕк питлĕ карчăка кам та пулин килсе курĕ-ши ун чухне? Эх, çамрăк вăхăтăма çĕнĕрен таварса урăхларах пурăнаттăм та, ытла кая юлнă çав.

**ЛЮДМИЛА.**

*Борис БОРИСОВ*

# Вăрман калаçăвĕ

Ăслă çынпа тус пулсан
ăслă пулан.

*Ваттисен сăмахĕ.*

Чăваш халăх писателĕн Александр Спиридонович Артемьевăн ятне халăх ырăпа асăнать, вăл çырнă хайлавсене ватти-вĕтти алăран ямасăр вулать.

Çав çул ман патăма, Тури Выла ялне, пĕр хĕрĕх çул каялла Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пĕрле ăс пухнă юлташăм килсе çитрĕ. Эпир Шупашкарта вĕреннĕ çулсенче педагогика институтне И.Я.Яковлев ятне паначчĕ. Çапла вара эпир Шупашкарта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институтĕнче иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче тантăшсемпе пĕрле пилĕк çул вĕрентĕмĕр. Мĕншĕн аса илтĕм-ха эпĕ çакна? Ара, ун чухне Çемен Элкер, Петĕр Хусанкай, Илпек Микулайĕ, Стихван Шавлы, Александр Артемьев, Ухсай Яккăвĕ тата чăваш ытти нумай çыравçи сывахчĕ, педагогика институтне студентсем патне пырса тĕлпулусем ирттеретчĕç.

Асра юлнă самантсем... Халĕ те вĕсем пирĕн умрах тăраççĕ тейĕн. Çемен Элкер, Александр Артемьев, Петĕр Хусанкай... Вĕсен сассисем хăлхара янăраççĕ. Петĕр Хусанкай «Тури Вылта туй сикет» поэмăна мĕнле çырни çинчен каласа пани тата... Элĕк районне кĕрекен Тури Вылара çуралса ӳснĕ эпĕ. Александр Артемьевпа кӳршĕллĕ тенĕ пек пурăннă. Пĕр урамра, хире-хирĕç, эппин. Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенче, тĕрĕсрех каласан, 1950 çулхи раштав уйăхĕнче Петĕр Хусанкай Александр Артемьев патĕнче, пирĕн тăван ялта, икĕ эрне пурăннă. Шăпах çав кунсенче ман тăванăн, Тарье аппан /аннесем пĕртăван/ туйĕ пулнă. 1950 çулхи раштав уйăхĕнче Микунра Тури Вылара туй кĕрленĕ. Çав кунсем инçене юлнă пулсан та, халăх асĕнчех.

Юлташăм аса илӳсемпе хĕмленсе пирĕн яла килсе çитрĕ. Александр Артемьевăн ачалăх сукмакĕсемпе, пултаруллă икĕ çыравçă утнă çулсемпе çӳреме кăмăл турĕ.

Паллах, эпĕ хаваспах килĕшрĕм. Урама тухрăмăр, Александр Артемьев çуралса ӳснĕ пӳрт умĕнче тăтăмăр шăпăртах. Кашниех хăй ăшĕнче тарăн шухăша путрĕ. Çакăнта çуралса, çак урампа утса, Мăн çăлăн сиплĕ шывне ĕçсе ӳснĕ-çке, вăй илнĕ Санькка пичче. Ялта çапла чĕнеççĕ ăна, Александр Артемьева. Юлташăмпа çурт умне Александр Артемьева асăнса çапнă хисеп хăми çинче çырнине вуларăмăр.

Вĕсен картишне, пӳртне кĕтĕмĕр. Унта халĕ Александр Артемьевăн пиччĕшĕн, Иван Спиридонович Артемьевăн, кил-йышĕ пурăнать. Иван Спиридонович мăшăрĕ Вера Яковлевна каласа панине тимлĕн итлерĕмĕр. Çак урамрах инçех те мар пурăнакан Тарье аппа патне кĕрсе куртăмăр. Петĕр Хусанкайăн «Тури Вылта туй сикет» поэмин тĕп сăнарĕ Тарье аппа пирĕн умрах. Чей ĕçнĕ май аса илĕве путать. Петĕр Хусанкай туйра юрланă юрра та юрласа кăтартрĕ. Тарье аппан мăшăрĕ çук ĕнтĕ, çĕре кĕнĕ. Пурнăç йывăр пулсан та, ырăпа аса илет вăл çав вăхăта. Юратса пĕрлешнĕ, çемье çавăрнă, ача-пăча ӳстернĕ. Пĕр ывăлĕн мăшăрĕ Шупашкарта Çамрăксен театрĕн артистки. Полина Владимирова-Чамжаева Чăваш халăх артистки ятне тивĕçнĕ. Кил хуçине тав туса урама тухрăмăр, Мăн çăл патнелле утрăмăр. Мăн çăл инçех мар, çав урамрах. Тарăн мар çырмара. Мăн çăл патне пырса пуç тайрăмăр юлташпа. Эпĕ тесен, кашни кунах шыв ăсма çӳретĕп çак çăла. Юлташăм вара пуçласа ку вырăнта. Петĕр Хусанкай, Александр Артемьев, ял халăхĕ шыв ăсса ĕçекен çăл умĕнче. Мăн çăл шывĕ – сиплĕ шыв. Юлташăм та çак шыва мухта-мухта, чун каниччен ĕçрĕ. Тав турĕ. Эпĕ хам, çăл çывăхĕнчех пурăнаканскер, кашни кунах тав тăватăп-ха çăла.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн çул малалла, икĕ çыравçă утнă çулпа. Паллах, Выла хĕррине. Елюк сăрчĕ патĕнчен иртрĕмĕр. Юлташăм аса илтерчĕ ун пирки. Александр Артемьев «Улма йывăç авăнать» повеçре ытла ытарлă çырса кăтартнă-çке. «Çак сăртран ял ачисем йĕлтĕрпе ярăнатчĕç. Çырма тĕпне çитиччченех тăрăнса каймасăр ярăнатчĕç ăмăртмалла. Пĕчĕк Санькка та сахал мар ярăннă», – тетĕп. Эпĕ каласа панине юлташăм тĕлĕнсех итлет. Ытла та чăнкă-çке сăрчĕ. «Ярăннă çав, савăнсах ярăннă, халĕ те ярăнаççĕ», – хам ачалăха аса илсе калатăп. Утатпăр малалла. Ял хыçала юлчĕ. Выла хĕррине çитрĕмĕр.

Выла... Акă вăл Выла... Юхать, юхать яланхи пекех. «Выляса юхать Выла», – калатăп юлташăма. «Кам каланă çакăн пек?» – ыйтатăп унран. Юлташăм, шухăша путнă юлташăм пĕр сăмах чĕнмесĕр тăрать. Кам пултăр, паллах, Александр Артемьев каланă.

Ун чухне Выла урлă кĕпер хывма пуçланăччĕ те юханшыв урлă каçма хурăн пĕрене пăрахнăччĕ. Çынсене каçса çӳреме ĕнтĕ.

Акă вăрман чăтлăхĕнчен юхса тухать Выла. Лăпкă вăл уяр çанталăкра. Калаçса юхать Выла. Ун калаçăвне тăнлатпăр юлташăмпа: «Кĕпере юсатпăр терĕç. Хăçан юсаса пĕтерĕç? Çынсене каçса çӳреме лайăх пултăр тесе ман урлă хурăн пĕрене хучĕç. «Малалла ан юхтăр Выла», – терĕç-ши? Эпĕ пур пĕрех юхатăп. Пĕрене айĕпе юхатăп. Ман Сăра çитмелле вĕт», – акă еплерех калаçрĕ пирĕнпе Выла. Юханшыва пуç тайрăмăр та хамăр çулпа вăрманалла утрăмăр. Петĕр Хусанкайпа Александр Артемьев çулĕпе. Юлташăм каллех Александр Артемьев хайлавĕнчи йĕркесене аса илсе утать: «Выляса юхакан Выл шывĕ урлă каççан кăнтăр-хĕвеланăç енче хура вăрман пуçланса каять, вăрманĕ ку питĕ аслă, вĕçĕ-хĕррисĕр». Пăхмасăр калать çак йĕркесене тантăшăм. «Шăпах çав вăрманалла утатпăр та ĕнтĕ эпир», – сăмах хушатăп эпĕ те. Тавралăхпа паллаштаратăп, паллă вырăнсем çинчен калатăп. «Ак çак вырăнта, çул хĕрринче, лаштра хурама ларатчĕ. Вăрмана хăртнă Ермак та тĕкĕнмен ăна. Йĕпе-сапаллă кунсенче хурама иртен-çӳрене хăй хӳтлĕхне илетчĕ. Шăрăх кунсенче ватти-вĕтти ун сулхăнне ларса канатчĕ. Ларатчĕ çапла ватă хурама тавралăха илем кӳрсе», – калатăп та калатăп хавхалансах.

«Эпĕ курмастăп-çке эсĕ калакан хурамана?» – ыйтать тĕлĕнсе юлташăм. «Пĕр вицĕ çул каялла пĕр путсĕр чунлă çын вут тĕртсе çунтарнă çав», – терĕм хурланса. «Аса илтĕм Александр Артемьев çырнине. Апла вăл çак хурама пирки çырнă». Вуланă пекех калама тытăнчĕ юлташăм. «Улăхра сурăх кĕтĕвĕ пăхакан ачасем çак хурама патне тавлашмалла чупса килетчĕç». Апла Санькка хăй те сахал мар выляна кунта. Ахаль пулсан, çакăн пек çырса кăтартас çук халăх писателĕ. Выляна çав. Эпир тӳрĕ çулпа малаллах калаçа-калаçа утатпăр. Ермак хăртни те сулахай енче тăрса юлчĕ. Вăрмана çывхарса пыратпăр. Уйра лаша кĕтĕвĕ çӳрет. Пĕр сарă тĕслĕ, хитре, яп-яка лаша пирĕнпе пĕрле вăрмана пырасшăн пулчĕ-тĕр. Хăй ĕмĕрĕнче сахал мар хутланă пулас çывăхри сĕм вăрмана. Утать те утать пирĕн хыçран. Лаша хыççăн – тихи. Кĕçенсе пырать-ха. Тихине хĕрхентĕмĕр. Лашана ачашшăн хăмсарса илтĕмĕр. Тихипе иккĕшĕн те пирĕнтен юлмалла, вĕсен кĕтӳре çӳремелле. Эпир каланине тăнланă пекех, тăрса юлчĕç. Çапла шăкăл-шăкăл калаçса вăрмана пырса кĕтĕмĕр. Вăрман çумне колхоз йывăçсем лартса ӳстернĕ. Çак вăрманпа çӳренĕ ĕнтĕ икĕ çыравçă. Эпир вĕсен çулĕпе пыратпăр. Каллех Александр Спиридонович çырнисене аса илетпĕр: «Ялан пĕр тĕслĕ, кичем те тĕксĕм чăрăш вăрманĕ: армак-чармак йывăçсем, пĕр-пĕрне хупласа хурасла кармашса, хĕвел çутине картлаççĕ; анчах çутăсăр та аптраман чăрăш турачĕсем çĕр çумĕнченех ашкăрса хăпараççĕ те, хăйсен черечĕпе, аяла пулса юлнă çамрăк туратсене хупласа хума ăнтăлаççĕ; çутта юратакан йывăç-курăк кунта кун кураймĕ, çурта пек яштака ӳсекен хыр та, çутăсăр пăчăхса имшерленĕ; хаваслă уçланкăсем те, чĕвĕлти кайăк сасси те çук унта». Татах-татах аса илсе пыратпăр çак йĕркесене вăрманпа пынă май. Артемьевпа Хусанкай чăрăш вăрманĕпе утнăранпа çур ĕмĕр ытла иртнĕ. Вăрманĕ те улшăннă. Пĕр çӳллĕ чăрăш тĕлĕнче чарăнса тăтăмăр. Хитре чăрăш. Икĕ çыравçă та пирĕн пекех вăрман илемне пăхса киленнĕ ĕнтĕ. Акă пĕр чăрăшĕ, пирĕнтен инçех те мар ӳсекенскер, калаçма тытăнчĕ. «Эй, каласа кăтартам-ха сире, ырă çыннăмсем. Çапла, килнĕччĕ çак вăрмана икĕ поэт. Сăвă каласа утаççĕ. Вăрçă çинчен аса илеççĕ. Вăрçăра пулнă ĕнтĕ вĕсем. Сирĕнтен çамрăкрахчĕ вĕсем ун чухне. Уксахласа утаканни ак çак тунката çине ларса канчĕ. Вăрçă суранĕ аса илтерсех тăрать пулас ăна. Эпир мĕн, çамрăк ун чухне. Пĕлĕтелле кармашма ĕмĕтленетпĕр çеç-ха. Тăнларăмăр эпир вĕсен калаçăвне. Пĕри, çамрăкраххи, Мăкшă вăрманне çитсе курасшăнччĕ. Уксахласа утаканнин пушмак кĕлли катăлса ӳкрĕ, пĕр йывăç турачĕ çине пырса такăнчĕ те.

Мăкшă вăрманĕ çинчен каласа кăтартнине аванах илтсе юлтăм эпĕ. Ĕлĕк-авал çак вырăнсенче Пугачев çарĕ тăнă пулать. Ун çарĕ пысăк пулнă. Таçта, çакăнтан инçетрех те мар, Пугачев çыннисем ылтăн пытарса хунă теççĕ. Шыраççĕ-шыраççĕ – тупаймаççĕ. Ăçтан тупăн çакăн пек пысăк вăрманта? Пытарса хурасси çапла пулнă: патша çарĕсем Пугачев çыннисене хĕссе пынă, пурлăхсене пытарма пуçланă, çыннисем вăрманалла тарнă. Çакăнтан инçех мар, юманлăхра мăкшă çынни тарса юлса пурăннă пулать. Чылай хушă пурăннă. Кунтан инçех мар Мăкшă вăрманĕ, кайса курăр», – çапла куларĕ пире нумай çул пĕлĕтелле кармашса ӳсекен чăрăш.

Тантăшăмпа иксĕмĕр уттартăмăр. Мăкшă вăрманĕ еннелле. Вăрман каш-каш кашлать. Унăн шавне итлесе утрăмăр. Вăрманĕ ку – юманлăх. Çанталăк кĕр енне сулăннăччĕ те кăмпа нумай шăтса тухнă; шурă кăрăç, юман кăрăçĕ – речĕ-речĕпе лараççĕ. Ултă витре ытла кăмпа татрăмăр вăрман калаçăвне, шавне итлесе. Хĕвел аниччен вăрмантан тухрăмăр, чылай шала кĕнĕ иккен эпир. Вăрман пире хăй çимĕçĕпе хăналарĕ, пуç тайсах ăсатрĕ. Татах-татах каламалли пурччĕ те вăрманăн, каç пулса килет.

Каялла, Тури Вылана, Илчеле улăх хĕррипе утрăмăр. Кунтан инçех мар Хĕрлĕ Чутай районне кĕрекен Штанаш ялĕ пур. Александр Артемьев Штанашри вăтам шкулта вĕреннĕ. Çак çулпа кашни ир ултă çухрăм Штанаша, уроксем хыççăн каялла, тăван яла, тепĕр ултă çухрăм утнă Тури Выла çамрăкĕ. Çутçанталăк илемĕпе киленме пĕлнĕ вăл. Çапла паллаштартăм пĕрле вĕреннĕ тантăшăма Тури Выла тăрăхĕпе. Вăрман калаçăвне те итлерĕмĕр. Çапла калаçа-калаçа утрăмăр юлташăмпа иксĕмĕр Выла хĕррипе.

***ТАКМАКСЕМ***

## Çĕклĕр-ха телей курки...

Пурăнатăп эп ялта,
Калаçатăп чăвашла.
Хутшăнатăп тăванпа,
Савăнатăп ял-йышпа.

“Чăваш хĕрарăмĕ” хаçата
Куртăм хĕрĕм патĕнче.
Кăмăлларăм чунтанах,
/Хальччен мĕнле пурăннах?/.
Хаçат кайрĕ кăмăла,
Илтĕм енчĕке алла.
Часрах чупрăм почтăна,
Çырăнтăм çур çуллăха.

Кун иртет халь шанчăкпа,
Эп кĕтеп почтальона.
Ав килет вăл урампа,
Тыттарать хаçат мана.
Хаçатсăр апат анмасть,
Çинĕ чух та эп вулап.
Аппетит ман аптрамасть,
Вула-вулах хам чăмлап.

Эпĕ халь пенсионер,
Пушă вăхăт ман нумай.
Пенсионерăн укçа пур,
Хаçат çырăнма май пур.

Тусăм, çырăнса илер,
Вăхăта перекетлер,
Укçа-тенкĕ – алăра,
Тупăрах кăмăлăра.

Такмакларăм кăмăлтан
Вуласа хаçат чунтан.
Çырăнар-ха, тусăмсем,
Пулар пĕрле, тăвансем!

Мĕн сунам, хаçат, сана?
Мĕн пиллем-ши юлташа?
Çĕклĕр-ха телей курки,
Пултăр вăл ялан тулли!

**Тулли кăмăлпа – Маруç.**
Каçал ен.




***ЭСИР ЫЙТНĂ ЮРĂ***

## Упăшкана юрас тесе

**Алина Михайлова юрлать**

Упăшкана юрас тесе
Ирпе ирех тăратăп,
Ан вăрантăр-ха тесе
Чĕрне вĕççĕн çӳретĕп.

Упăшкана юрас тесе
Шăрттан-кукăль тăватăп,
Вырăн çинчех çитĕр тесе
Умне пырса лартатăп.

*Хушса юрламалли:*

Мĕн тăвас тен, мĕн тăвас тен,
Мĕн тăвас тен, тупата?
Упăшкана çухатсассăн
Тепре ăçтан тупмалла?

Упăшкана юрас тесе
Кĕрĕк тăхăнтартатăп,
Пурте ăмсанччăр тесе
Галстук çыхса яратăп.

Упăшкана юрас тесе
Килте тирпей тытатăп.
Ăна лайăх пултăр тесе
Ăш сăмахсем калатăп.

*Хушса юрламалли.*

Упăшкана юрас тесе
Пыл сăри те тăватăп.
Чĕвĕл-чĕвĕл сассăмпа
Хунямана мухтатăп.

Упăшкана юрас тесе
Юрла-юрла ĕçлетĕп.
Ăна килĕшес тесе
Фитнес-клуба çӳретĕп.

*Хушса юрламалли.*



ÇĔНĔ ЧУН

**Çак тĕнчене çĕнĕ чун килни яланах асамлăхпа çыхăннă. Анчах та физиологи енчен пăхсан çĕр-çĕр çул хушшинче те нимĕн те улшăнман темелле – ĕмĕрсен тăршшĕпех пĕр çулпа çуралать ача. Вăт унăн амăшне пулăшас меслетсем вара çĕнелсех-улшăнсах пыраççĕ. Акушерство малаллах аталанать.**

# Аист вĕçсе килчĕ...



Пирĕншĕн паян ачана месерле выртса çуратни йĕркеллĕ, хăнăхнă пулăм пек туйăнать. Анчах нумаях пулмасть кăна-ха çакна модăна пăхăнса кăна пурнăçланă вĕт – ку меслете акушерствăна "хĕвел-король" XIV Людовик кĕртнĕ. Францире ун чухне пĕтĕм Европăри пекех çăмăлланнă хĕрарăмсем – ятарлă кресло çине ларса. Ун тĕпĕнче вара ачана тухса ӳкмешкĕн шăтăк пулнă. Акушерка çав вăхăтра е лутра сак çинче ларса тытнă пепкене е чĕркуççи çинче. Тата мĕн вăхăт асаплантарĕччĕç-ши медицина çак ĕçченне? Пĕррехинче Людовик хăйĕн еркĕнĕ епле çуратнине сăнама кăмăлĕ пуррине пĕлтернĕ. Анчах та король вĕт-ха вăл – епле чĕркуçленсе тăтăр? Çапла вара хĕрарăма çурăм çине вырттарса çăмăллантарма шухăшланă. Çакăн хыççăн Франци чаплă çыннисем корольрен тĕслĕх илнĕ, вĕсен хĕрарăмĕсем те çурăм çине выртса çуратма пуçланă.

Ку пуçарăва тухтăрсем те ырласа йышăннă. Çурăм çинче выртакан хĕрарăм тĕлĕшпе ĕçleme вĕсене çăмăлрах пулнă. Кун пек меслет физиологи енчен питех меллĕ пулманни, ача çуралас вăхăт ӳсни вĕсене пачах та пăшăрхантарман. Виçĕ ĕмĕр Франци акушерстви Европăра мода тытса пынă. XX ĕмĕр вĕçнелле кăна малтанхи меслет патнех каялла таврăннă вĕсем – вертикальлĕ çурату пепкешĕн те, хĕрарăмшăн та меллĕрех.

Сăмах май, çак мелпех – тăрса, чĕркуçленсе е ятарлă пукан çине ларса ытти çĕршыв хĕрарăмĕсем те çуратнă: Инди, Ази, Америка... Европа колонизаторĕсем вĕсем патне çитиччен.

## Асамлă курăксем

Пирĕн мăн-мăн-мăн асанне-кукамай, паллах, çурăм шăмминчен укол туса ыратнине ирттересси пирки шухăшлама та пултарайман. Çапах та хĕрарăм асапне чакармалли меслетсене лайăх пĕлнĕ вĕсем. Авал, сăмахран, çак тĕллевпе ырă шăршăллă курăксемпе усă курнă, унсăр пуçне – ритуал юрри-ташшипе те. Сăмах май, çав юрăсемпе пулас ача амăшĕсене куç пăвнă пекех усă курнă. Çавна май ыратнине чăнласах туйман хĕрарăм. Унсăр пуçне вăл юрра пулах кирлĕ пек сывлама пултарнă – ку та çăмăлланма пулăшнă.

Ĕлĕкрех курăксемпе усă курсах хĕрарăма хырăм та пăрахтарнă, çăмăлланнă хыççăн юн кайнине те чарнă. Ку кăна та мар-ха, çие юлнипе-юлманнине тĕрĕслемелле... тест пек те усă курнă вĕсемпе! Авалхи Египетра нумаях пулмасть çуратнă хĕрарăмăн кăкăр сĕтне ятарлă курăкăн сĕткенĕпе хутăштарнă та çие юлни пирки иккĕленекеннине ĕçтернĕ. Хĕрĕх чĕрнеллĕ хĕрарăмăн ăш-чикĕ çак хутăшран чăтма çук хытă пăтраннă.

## Авалхи операцисем

Ачана операци туса /кесарево сечение/ пĕрремĕш хут XVII ĕмĕрте касса илнĕ тесе шухăшлаççĕ. Анчах та археологсем тупнă япаласем тата Африкăра пурăннă йăхсене тĕпчени ку операцие чылай малтан пурнăçлама пуçланине çирĕплетеççĕ. Ăнăçлă тата.

Авалхи Грецире акушеркăсем хырăм пăрахтарма та пĕлнĕ. Эллинсемшĕн çакă çылăх шутланман – вĕсем варта тин кăна тĕвĕленнĕ пепкене чун кĕрсе ĕлкĕрейменнине ĕненнĕ. Грексен пулас ача хĕр е ывăл иккенне тĕрĕслемелли мелсене чĕсем те пулнă – ача кĕтекен хĕрарăмăн кăкăр пуçĕ кăнтарса тăрать тĕк арçын ача пулмалла, аялалла усăннă пулсан – пикене кĕтмелле.

Акушерство вăрттăнлăхĕсем пĕр эпи карчăккинчен теприне куçнă. Вĕсем, сăмахран, ачана хăвăртрах тухма пулăшма пултарнă. Варта мелсĕррĕн выртакан пепкене çавăрма та пĕлнĕ вĕсем – кун пек чухне çуратма питех те йывăр-çке. Ку меслете Авалхи Инди эпи карчăккисемех пĕлнĕ. XVI ĕмĕртех акушер хĕскĕчне те шутласа кăларнă. Вĕсемпе XX ĕмĕр вĕçлениччченех усă курнă /хăш-пĕр çĕрте халĕ те пăрахăçа кăларман/. Телее, цивилизаци çĕршывĕсенче халĕ вĕсемпе усă курма чарнă. Сăлтавĕ те пур – çав хĕскĕчпе ачана çăмăллăнах амантма пулать. Халĕ, акушерство хирургийĕ аталаннă май, паллах урăхларах меслетсем анлă сарăлнă.

## Руç

Пирĕн çĕршывра çак ĕç вăрттăнлăх чаршавĕпе хупланнă. Йăли-йĕрки те нумай пулнă. Калăпăр, çăмăлланма хатĕрленнĕ хĕрарăмăн çивĕтне сапаланă, унăн тумтирĕ çинчи пур тĕвве те салтнă. Çапла майпа ăс-тăн шайĕнче хĕрарăма çăмăлланма пулăшнă. Пилĕкрен касма пуçланă самантра кун пек хĕрарăмăн килĕнчи пур арчана та уçнă, çанталăк ăшă пулсан – пур чӳречепе алăка та.

Ача çуралнă самантра пулас ашшĕ те çав вырăнта пулни – пирĕн вăхăтри мода мар. Авалах вăй илнĕ ку йăла. Арçын эпи карчăккине пулăшнă, арăмне тĕкĕлесе тытса тăнă, шыв ĕçтернĕ, кирлĕ тĕк чĕркуççипе ятарлă вырăнтан тĕревлесе ыратнине ирттерме те пулăшнă. Паллах, капла тума ăна карчăк вĕрентнĕ. Хăш-пĕр çĕрте арçын çак процеса тата хастартарах хутшăннă – унăн арăмĕпе пĕрлех йынăшмалла, ахлатмалла пулнă.

Эпи карчăккисен ĕçне I Петĕр йĕркене кĕртме тăрăшнă. Вăлах сăнсăр е сусăр çуралнă ачасене вĕлерме чарнă – унччен маларах çакă йĕркеллĕ пулăм шутланнă. Авалхи Спартăра та вăйра пулнă çакă.

Çие юлнипе тата ача çуралнипе çыхăннă авалхи хăш-пĕр йăла-йĕрке пирĕн кунчченех упранса юлнă. Сăмахран, ун пек хĕрарăмăн çыхма юрамасть – çакă ача кăвапапа пăвăнасран упрать имĕш. Пирĕнтен нумайăшĕ паян та ача çут тĕнчене килмесĕр ун валли япала туянма васкамасть-ха. Паллах, ку объективлă нимĕнле сăлтавпа та çыхăнман. Калăпăр, Европа чиперукĕсем ача кĕтнĕ чух шăпах çыхма юратаççĕ – ку ĕç нерв тытăмне лăплантарни, хитре япала кăмăла çĕклени пуриншĕн те паллă. Çав вăхăтрах Европăра варти ача кăвапапа çыхланса пăвăнасси анлă сарălман. Тепĕр тесен, ĕненмелле-и сăнавсене е çук-и, çакна кашни хăй татса парать. Чи кирли, варти ача 9 уйăх тăршшĕпех хăйне лайăх туйтăр тесе ăна лăпкăн, çав вăхăтрах савăнăçпа кĕтсе илме хатĕрленмелле.

## ● СĂНАВСЕМ

Ача сывă та йĕркеллĕ çуралтăр тесе амăшĕ темĕн тума та хатĕр. Çав сăлтавпах, паллах, аваллăхран сыхланса паянччен упраннă йăла-йĕркене те пăхăнать хĕрарăм. Халĕ медицина çĕнĕ йышши темĕн тĕрлĕ оборудованипе усă курать пулсан та асанне-кукамай вăхăтĕнчи сăнавсене те шута илет. Тĕп вырăнта ача сывлăхĕ, паллах, анчах çав вăхăтрах хĕр е ывăл пуласси те кăсăклантарать пулас амăшне. Мĕнлерех сăнавсене шута илнĕха ваттисем?

●Арçын тăвăр йĕмпе çӳреме кăмăллать тĕк ывăл çуралать, шăлпар труççи кăмăллакансен ытларах чухне хĕр кĕтсе илеççĕ.

●Шĕвĕр хырăм ывăл çураласса систерет, çавраки – хĕр.

●Амăшĕн пылак çиес килсен хĕр кĕтни вырăнлăрах, хĕрарăма çăмарта, сыр е какай енне туртсан – ывăл.

● Кăкăр пуçĕ хуралнине – хĕр çураласса, çутални – ывăл.

● Пулас ача амăшĕн хырăмĕ çинче çăм ытларах ӳсме пуçлани çемьере ывăл хушăнассипе çыхăннă.

●Хĕрарăмăн чĕре таппин хăвăртлăхĕ чакни – ывăла, пачах тепĕр май, хăвăртлăх ӳсни – хĕре.

●Çие юлнă хыççăнах кăмăл пăтранмасан та ывăл çуралма пултарать.

●Хĕр амăшĕн илемне вăрлать – хĕрарăмăн сăн-пичĕ улшăнать, пăнчăсемпе витĕнет.

●Чăн та, православи чиркĕвĕ кам çураласси те пĕлме чарать хĕрарăма. Ку хырăм пăрахнă пекех çылăх шутланать.

## ● АЧА КĔТЕКЕН ХĔРАРĂМĂН МĔН ТУМАЛЛА МАР?

● Алăк сулли çинче ларма тата пĕрене урлă каçса çӳреме юрамасть. Алăк сулли мĕн авалтанах икĕ тĕнче чикки шутланнă. Алăк леш енчи пепкене пирĕшти сыхлаймасть имĕш. Çак сăнава ăнлантарма пулать. Алăк сулли çинче ларнă чухне çурăм шăммине пушшех йывăр килет. Унсăр пуçне витĕр вĕрекен çил хĕрарăм организмне начар витĕм кӳме пултарать. Пĕрене урлă ярса пусма мĕншĕн чарни капла та ăнланмалла-тăр: çӳллĕ япаларан такăнса ӳкме те пултарать хĕрарăм.

●Пулас ача амăшĕн кушака ачашлама юрамасть – пепкене пурнăç çулĕ çинче чее тăшмансем кĕтсе тăрĕç.

Тăшманĕсем, чăн та, пулма пултараççĕ, анчах та вĕсен ячĕ те пур – токсоплазмоз. Вăл нерв тытăмне начар витĕм кӳрет. Хĕрарăм çакна хăй сисмессе те пултарать, анчах та юн урлă ачана куçать. Çак чире шăпах кушак парнелеме пултарать. Ачаш чĕрчуна питех те кăмăллакан хĕрарăмăн ку чире анализ тутарса тĕрĕслесен аванрах.

●Ача кĕтекен хĕрарăмăн урисене авса ларма юрамасть – пепки кукăр уралла пулать.

Урана хĕреслĕ явса ларманни пуриншĕн те лайăх – кун пек чухне юн тымарĕсем хĕсĕнеççĕ, юн çӳресси начарланать.

●Кун пек тапхăрта çӳçе кастармасан аванрах.

Авал вăрăм çӳç хĕрарăма сивĕрен сыхланă, çавăнпа ăна кастарма юратман – ку сывлăха та начар витĕм кӳнĕ-çке. Паян парикмахерскине кайса çӳçе илемлĕ кастарнинче нимĕн хăрушши те çук – тирпейлĕ çӳренине мĕн çиттĕр?

## ●ÇИЕ ЮЛМАСАН...

Анчах хăшĕ-пĕрин урăхларах кăткăслăх – ачасăр çемьесен йышĕ ӳссех пырать.

●Кун пек чухне ача кĕтекен хĕрарăмсемпе тăтăшрах хутшăнма сĕнеççĕ – вĕсен энергийĕ ыттисене куçма пултарать. Çавăн пекех пысăк хырăма алăпа пĕр вăхăт перĕнсе тăни çие юлас шанăçа темиçе хут та ӳстерме пултарать теççĕ.

●Ача кĕтекен хĕрарăм ларнă пукан çине вырнаçни, вăл тытнă куркаран ĕçни, унăн тумтирне тăхăнса пăхни те ĕмĕте пурнăçа кĕртме пулăшнине калаççĕ.

● "Фикус тата пепке" программăна та пуçрах тытма сĕнеççĕ. Ача пирки ĕмĕтленекен çамрăк мăшăрăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче фикус пулмалла. Асамлă çак ӳсен-тăран çие хăварма пулăшнине ĕненеççĕ.

●Урамри йытă е кушак çурине киле илсе кĕни те палăртнине пурнăça кĕртме пулăшать-мĕн. Енчен те вĕсем хăйсемех сирĕн алăк патне пырса сăтăрăнса ачашланма пуçласан – кĕтмен çĕртен çие юласса.

## ●ПАЛЛĂСЕМ

Калăпăр, ĕмĕт пурнăçланнă пек туйăнать. Çакна систерекен паллăсем пур-и тата? Паллах.

●Çие юлнă хĕрарăмăн савăшас туртăм темиçе хут вăйлăрах.

● Малтан аса та илмен апат-çимĕç енне туртăнать вăл.

●Шăршă туясси те вăйланать унăн. Апла тăк, духи е одеколон маркине таçтан аякран уйăрма пуçларăр тăк пĕлĕр, тем пулса иртет сирĕн организмра...

## ●ТĔРĔСЛЕВСЕМ

Ирсерен ăш пăтранма, пуç çаврăнма тытăнсан вара пĕлĕр – çав "темĕн" ячĕ те пур: эсир кĕçех амăшĕ пулатăр! Çаплах иккĕленетĕр-и? Апла тăк ирхи шăка темиçе тумлам йод ярăр. Йăлтах ирĕлсе кайрĕ-и? Апла текех ан иккĕленĕр. Эсир чăнласах ача кĕтетĕр.




Раштав уйăхĕн 31-мĕшĕ. Ырантан çĕнĕ пурнăç пуçлатăп!
Кăрлачăн 1-мĕшĕ. Мĕн пиркиччĕ-ха эпĕ???
* * *
Хĕрарăм касхине лайăх хăналаннă курăнать. Ирхине пуçĕ ыратнипе вăранса каять хайхи.
– Эсĕ кун пек чухне мĕн тăваттăнччĕ? – ыйтать хĕрарăм сиплевре пулнă хыççăн ĕçме пăрахнă упăшкинчен.
– Мĕн тăваттăмччĕ-мĕн тăваттăмччĕ... Эсĕ нăрланине итлесе выртаттăмччĕ...
* * *
Хăнана каяс умĕн вырăн сарса хăварăр. Хăнаран таврăнсан мĕн тери ăслă çак утăмшăн хăвăра мухтаса та çитереймĕр...
* * *
– Ырă чунлă Хĕл Мучи! Мана санран нимĕнле парне те кирлĕ мар – хамах туянăп: шалăва кăна ўстерсе пар...

**И-ХИ-ХИК**

* * *
Ача садĕнче Çĕнĕ çул уявланă хыççăн ашшĕ ывăлĕпе калаçма шухăшлать.
– Ывăлăм, нимĕнле Хĕл Мучи те çук. Паян хĕрлĕ халат тăхăнни, сухал çыпăçтарни вăл эпĕ пултăм.
– Пĕлетĕп эпĕ, атте. Аист та эсех вĕт...
* * *
– Атте, пĕлетĕн-и: пĕр пуйăс питĕ кая юлса çўрет.
– Мĕнле пуйăс тата?
– Эсĕ мана иртнĕ Çĕнĕ çула парнелеме шантарни.
* * *
– Ăнланса пĕтерме çук аслисене. Малтан тăрăшсах Хĕл Мучи пуррине ĕнентереççĕ, кăшт вăхăт иртсен – çуккине...
* * *
Алăкран шăнкăравлаççĕ. Хĕл Мучи виçĕ Юр пикепе çитсе кĕрет.
– О-о! Сирĕн çар ўссех пырать! – тĕлĕнет кил хуçи.
– Аха, – килĕшеççĕ Юр пикесем. – Касхи вунă сехет хыççăн ăна эсир пĕччен сĕтĕрсе пăхăр-ха...
* * *
"Мерседеса" хыçалтан "Ока" пырса чышать. Малти машинăран çирĕп хулçурăмлă каччăсем тухаççĕ. Хыçалтинче Юр пике ларатьмĕн.
– Мĕнпе тўлес тетĕн – ыйтаççĕ хĕртен.
– Ан пăлханăр, – тет лешĕ. – Эпĕ Хĕл Мучи патне шăнкăравласа ярам. Вăл килсен йăлт татса парĕ.
Хайхи телефонпа шăнкăравлать. Кĕçех тăватă джип килсе чарăнать. Унтан шкап пек арçынсем тухаççĕ те кусене ислетеççĕ кăна. Пĕри "Ока" патне шуса çитет те:
– Эсĕ, тăмсай, – тет хĕре, – Хĕл Мучи килет терĕн вĕт-ха?

– Хĕл Мучи пушă мар иккен, – хуравлать Юр пике. – Хăй вырăнне хуралçисене янă авă.
* * *
– Санăн çўçў питĕ илемлĕ – кур-ха, мĕнлерех авăнса тăрать!
– Хам та тăрăшрăм çав! Ирхине ятарласа кăтралатрăм.
– А-а-а, эсĕ ăна хăв çапла тунă-им? Эпĕ хăех кăтра тесе...
– Хăех кăтра пулнă тăк вара эпĕ ăна тўрлететтĕм.
* * *
Ют çĕршыв фирми çĕнĕ сейф шухăшласа кăларнă. Ăна тĕрĕслемешкĕн тата рекламăламашкăн конкурс пĕлтернĕ: сейфа 1 миллион тенкĕ хураççĕ, çутта виçĕ минутлăха сўнтереççĕ, çав вăхăтра ăна кам кăларса илме ĕлкĕрет – çавă илет. Конкурса виçĕ çĕршыв хутшăнма кăмăл тăват: Америка, Германи тата Раççей. Малтанах американсем тухаççĕ. Çутă сўнет. Чакаланаççĕ-чакаланаççĕ хайхисем. Çук, нимĕн те пулмасть. Вĕсемпе нимĕçсем тупăшаççĕ. Çутă сўнет. Виçĕ минут иртет. Кусен те нимĕн те пулмасть. Вырăссен черечĕ çитет. Çутă сўнет. Хайхисем ĕçлеме пуçлаççĕ. Виçĕ минутран... çутă çук. Татах пусаççĕ – çутăлмасть. Мĕн амакĕ? Тĕттĕмре сасă илтĕнсе каять:
– Саня, вĕсен лампочкисемпе мĕн тăватăн? Санăн кĕсйўнте – миллион!
* * *
Çĕнĕ супер-паттăр – студент! Вăл пĕр раштавра кăна авăн, юпа, чўк уйăхĕсенче пурнăçламалли ĕçсене туса ĕлкĕрет!
* * *
"Кунта Саша пулнă", "Кунта Ваçса пулнă", "Кунта Слава пулнă". Тем вĕчĕрхентерет... Те почеркĕсем килĕшмеççĕ, те – çакна йăлтах çывăрмалли пўлĕмри шкапра тупса вулани...
* * *
Пĕр хĕр принц шурă лаша утланса çитессе кĕтнĕ-кĕтнĕ. Ун патне вара почтальон пынă... пенси парса хăварнă...
* * *
Адвокат тĕрмене пĕр "чăнкă" арçын патне пынă.
– Акă сана пĕр чăматан укçа! – тет лешĕ. – Судья кăмăлне çавăр, мана пĕр çултаläкăлăха кăна хупчăр.
– Манăн шухăшпа... – калама тăрать адвокат.
– Санăн шухăшу никама та кăсăклантармасть, – каласа пĕтерме памасть ăна арçын. – Пĕр çултаläк! Ăнлантăн-и?!
Хайхи суд пулать. Арçынна пĕр çултаläкăлăха ирĕклĕхсĕр хăвараççĕ.
– Йывăр пулчĕ-и? – ыйтать савăннă арçын адвокатран.
– Питĕ йывăр – судья сана пачах хупасшăн марччĕ...

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ


### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 89603073151.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Работаем без выходных. Т. 89603073151.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 89603016374.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич,** блоки. **Т. 89613393363.**

**16.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**43.Бычков, коров, телок, лошадей.** Т.: 89033898572, 89677949282.

**44.Коров, бычков, лошадей.** Т.: 8-927-852-24-56, 89613450528.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-967-471-50-70.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.Натяжные ПОТОЛКИ за 1 день.** Т. 8-937-397-24-42.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

**837.Бурение скважин на воду.** Т. 8-906-381-60-37.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Порядочный, добрый, простой мужчина /40х170х70/, чуваш познакомится с доброй, умной, красивой женщиной от 26 до 42 лет. Т. 8-937-942-17-20.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам: 28-83-70, 56-04-17.


# Сăмах каçмăш

**Н.КРАСНОВ Муркаш районĕ/ хатĕрленĕ**

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Кĕлетке пайĕ. 5. Попугай тĕсĕ. 7. Тĕвесен кĕтĕвĕ. 8. Пир тĕртмелли хатĕр. 10. Хăй çĕнĕ, шăтăк /туп. юм./. 12. Вĕçенкайăк. 14. Утă купи. 15. Çĕршыври фотопленкăсен «завочĕ». 16. Тинĕсри вăрă-хурах. 18. ... япалине виçсе илмеççĕ /ват. сăм./. 19. Пистолет. 20. Чĕрнене илем кўрекен. 22. Ай-уй! Ан тивех – ўкетĕп /туп. юм./. 24. АПШри штат. 25. Çĕршыв тĕрекĕ. 26. Вăл пралук тăрăх чупать.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Выльăх апачĕ. 2. Çурхи ĕçси. 3. Виçе. 4. Ĕç укçин пайĕ. 5. Çĕр лаптăкĕ. 6. Казахстанри хула – Алма-... 9. Казаксен ялĕ. 11. Граната тăванĕ. 12. Лаша уринчи телей. 13. Ялти «будильник». 17. ... Бульба. 18. Шакла кавир. 20. Мунча кўрши. 21. Цехри транспорт. 22. Шахмат вăййинчи «тамаша». 23. Пукан.




**«ХЫПАР»**
Издательство çурчĕ автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор
**М.М.АРЛАНОВ**

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 15.01.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 8057. Заказ 84.